Ц. Б. им. Горького

*Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!*

1938 ЙАНВАР. 6 КӖҪНЕРНИКУН 5 (4818)-мӗш №

# Чӑваш Коммунӗ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—86, Редакци секретарӗн 4—46, Дежурнӑйӑн 6—23

## Вӑрман хатӗрлевӗ—хӗрӳлӗ ӗҫ

Кашни ҫӗнӗ кун пирӗн телейлӗ Совет ҫӗршывӗн пурнӑҫне, савӑнӑҫлӑ та хӗпӗртетерекен ӳсӗмсем илсе килет. Ҫак кунсенче анчах епӗр ССР Союзӗн Аслӑ Советне пирвайхи хут Сталинла Конституци тӑрӑх суйланӑ чаплӑ 1937 ҫула — промышленнӑҫпа йалхуҫалӑхӗ, культура вӑйлӑн ӳсине, социализмла ҫӗршыври граждансен, политикла тата производствӑлӑ активлӑхӗ виҫҫанхипчен ытла вӑйланнипе тулнӑ ҫултӑлӑка — савӑнӑҫлӑн ăсатрӑмӑр.

Пирӗн Чӑваш республикӗ 1938 ҫула сталинла виҫҫӗмӗш пиатилеткӑн пӗррӗмӗш ҫулне пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илчӗ. Предприйатисенчи, алӑсталӑх ертелӗсенчи темиҫе вуншар пин рабочисем, ҫӗршер инженерсем тата техниксем — телейлӗ пурнӑҫ ҫӗнтерӗвӗпе ҫӗкленнӗ граждансем стахановецсен ретне тӑрса хамӑр аслӑ ҫӗршывӑн пуйанлӑхне ӳстерессипӗн, тӗрӗклӗхне ҫирӗплетессишӗн кӗрешӳве тухрӗҫ. Касйанован Кусков станочникӗсен наттӑр аллисене ӑҫӑхса Сӗмӗрлӗ комбинатӗнчи станоксем тӑватшар норма пама тытӑнчӗҫ.

Рабочисемпе инженерла-техникла работниксен чаплӑ коллективӗн пултарулӑхне пула Сӗмӗрлери „Большевик", Вӑрнарти фосфорит, Шупашкарти тирсӑран, спирт тата ытти нумай заводсем ҫултӑлӑкри плана срукчен тултарса, ҫӗршыва темиҫе мӗлйун тенкӗлӗх продукци пачӗҫ.

Массӑсен политикӑла тата производствӑла активлӑхне производствӑна тӗрӗс организацилени, руководствӑ тата производствӑ техникине алла ҫаварса илни, массӑсене ӗҫлеме, канма кирлӗ таран условисем туса пани, массӑпа таччӑн ҫыхӑнса, вӗсен пуҫарувӗсене ҫийӗнчех сӳлӗ вырӑна ҫӗкленӗ, умра тӑракан задачӑсене тӗрӗс ӑнланса илсе, вӗсене хӑвӑрттӑн пурнӑҫа кӗртме массӑна мобилизацилени никӗс ҫинче ӗҫ йаланах ӑнса, ҫыхӑнса пырать. Малашнехи ҫӗнтерӳсем валӗҫи ҫул уҫӑлсах тӑрать.

Чӑвашвӑрманпром, вӑрманпромхозсен руководителӗсем, 1937 ҫулта ҫав тивӗҫлӗ, кулленӗ тумали обйазаннӑҫсене пурнӑҫа кӗртессинчен пӑрӑнса, пӑнтӑхса тутӑхнӑ кивӗ меслетсемпе йертсе пырас ҫул ҫине тӑнӑ. Ҫавӑн ҫинчен калать ӗнтӗ 1937 ҫулхи вӑрман хатӗрлев планне тултарманни, механизациленӗ ҫулсем 1937 ҫулхи IV-мӗш квартал планне 47,8 процент ҫеҫ тултарни, ӗҫтухӑҫлӑхне ӳстерес плана вӑтамран та 90 процент ҫеҫ пурнӑҫлани. Республикри вӑрманпромхозсемпе вӑрман пункчӗсенчен Шупашкар вӑрманпромхозӗсӗр пуҫне никӗшӗ те 1937 ҫулти плана тултарман.

Чӑвашвӑрманпром, вӑрманпромхозсен руководителӗсем плана тултарайманнипе ӗҫ вӑйӗ ҫителӗксӗрри, районсенчи совет организацисем пулӑшманни ҫине йӑвантарма пиҫенеҫҫӗ. Хайсен сӳрӗк, ҫунсӑр ӗҫӗсене „ӗҫ вӑйӗ ҫитменнипе" витес йӑла чӑвашвӑрманпром руководствинчен пуҫласа мастӑрсем патне ҫитиех саралнӑ.

Чӑнах та, районсенчи совет оргӑнӗсем вӑрман хатӗрлес ӗҫе ҫителӗклӗ таран пулӑшман. Ӗҫ вӑйӗ организацилесси пирки тимлӗн ӗҫлеменнипе пысӑк чӑрмав кӳнӗ. Анчах ку сӑлтавсем вӑрманпромхозсене алӑсене усса ларма ирӗк памаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл вӑрманпромхозсен хӑйсен аллинчи мӗн пур майсемпе усӑ курса механизацие лайӑххӑн ӗҫлессине, йалан ӗҫлекен кадрсем хушшинчи ӗҫе лайӑхлатма колхозсемпе тунӑ договорсене пурнӑҫлӑ тӑвасси ҫине, стахановла йӗкӗрлӗхе вӑйлатасси ҫине, тата ытларах пӑхма хушнӑ. Ҫакна Йӗпреҫ вӑрманпромхоз директорӗ Солдатов пек чӗмсӗр руководителсем кӑна ӑнланасшӑн пулман. Ӑнланнӑ пулсан та йӳрийех пурнӑҫламан. Унта ӗҫ ҫапла тӑнӑ: тракторсем йусавлӑ пулнӑ, ҫул йусавлӑ мар. Унтан ҫулӗсене йусанӑ — тракторсем ҫӗмӗрӗлнӗ. Кайарах та тракторсем те, ҫул та йусавлӑ, анчах турттарма хатӗрленӗ йӑвӑҫсем пулман! Сакнашкал сӑтӑрла ӗҫсем ҫинчен Чӑвашвӑрманпромӗнче сигналсем пулнӑ, анчах унӑн руководителӗ **Павлов** йулташ вӑл сигналсене хӑлхана чикмен.

Вӑрман организацийсенче пулнӑ тӑшмансем вӑрман хатӗрлев ӗҫне сахал мар сӑтӑрланӑ. Халӑх тӑшманӗсене кӑларса сирпӗтнӗ хыҫҫӑн ,вӑрман организацисем хӑйсене валӗҫи кирлӗ выводсем тумала пулнӑ. Анчах 1937 ҫулти вӑрман хатӗрлев планне тултарманни,—сӑтӑрҫӑсен йӗлӑшкисене пӗтерессишӗн тивӗҫлӗ кӗрешӳ пуҫарманни ҫинчен калать. Стахановла йухӑма вӑйлатас тӗлӗшпе вырӑнтан та тапранман. Хӑшпӗр вӑрманпромхозсенче (Вӑрнар, Йӗпреҫ) стахановла йухӑма пуҫарса пынӑ. Ҫавна пула ӗнтӗ 1937 ҫулӑн йулашки 8 уйӑх хушшинче стахановецсен хисепӗ 19 процент ытла чакнӑ.

Вӑрман хатӗрлев планне тултарманнишӗн вӑрмансенчи суту-илӳ организацисем те, вӑрманпромхозсемпе пӗр танах, айӑплӑ. Кӳҫса сӳрекен ларйоксем организацилеменни, столовайсенче апат пахалӑхне лайӑхлатманни, кирлӗ таварсем ҫителӗклӗ тӑратманни—пурте вӗсем вӑрман хатӗрлев ӗҫне пысӑк чӑрмав кӳреҫҫӗ. Партипе профсойуз организацисем культмассӑлӑ ӗҫе кирлӗ вырӑна лартманни те вӑрманта ӗҫлекенсен хавасӑлӑхне чакарать.

Халӗ епӗр кӗркуннепе хӗллехи вӑрман хатӗрлев планне тултарассине татса паракан татӑклӑ квартала кӗтӗмӗр. Ку квартал пӗтӗм ҫӗршывра производствӑлӑ активлӑх ҫав тери пысӑккӑн ҫӗкленнӗ вӑхӑтра пуҫланчӗ. Ҫак условисенче вӑрман хатӗрлев планне тултарма майсем ҫителӗклӗ. Вӑрман работниксен задачӗ — стахановла йухӑма массӑлӑ йухӑм туса йарасси пулать. Лайӑх стахановецсен опычӗсемпе пӗтӗм бригадӑсемпе вӑрманпункчӗсене ӗҫлеме вӗрентмеле. Ӗҫре ӳснӗ кадрсене руководствӑ ӗҫне хӑйулӑн кӑлармала.

Механизаци пӗтӗм вӑйӗпе тата пултарулӑхӗпе усӑ курма, рабочисен техникӑ пӗлӗвне ӳстерни кирлӗ. Ҫакна йалан асра тытмала.

1937 ҫулти ӗҫсенчен выводсем туса, районри организацисемпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлесе, 1938 ҫулти плана тултарассишӗн кӗрешмеле. 1938 ҫулта вӑрман хатӗрлекен организацисем умӗнче пысӑк задач тӑрать — вӑрман хатӗрлев планне вӑхӑтра тултармала. Вӑл задач пурнӑҫлӑ. Вӑл задача пурнӑҫа кӗртессишӗн колхозниксене массӑлӑн организацилемеле.

## Рузвеьт посланийӗ

ВАШИНГТОН, йанварӗн 3-мӗшӗ. Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен конгресӗн черетлӗ сессийӗ уҫӑлнӑ май, Рузвеьт конгреса послани йанӑ. Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем мир ӗҫне сыхлас тӗлӗшпе ҫине тӑнине пӑхмасӑрах,—тесе каланӑ Рузвеьт,—тӗнчен ытти пайӗсенчи ҫӗршывсен ӗҫӗсемпе политики вӗсемпе тӳрех кӳршӗлӗ ҫӗршывсене ҫеҫ мар, ҫавӑн пекех Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсене те питӗ хытӑ туйтарать. Епӗ ҫире кӑмӑллӑпах, Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсем мирлӗ саманара пурӑнассӗ тесе калама пултараттӑп. Ҫак мирлӑ пурнӑҫ ытти вӑхӑтра, хӑйсем пысӑк вырӑнта тӑнӑ пирки, вӑрҫӑ пуҫлама пултаракан провокацисене пӑхмасӑрах, тытӑнса тӑрать. Епӗр,—тесе кӑтартать Рузвеьт,—тӗнчери тавлашусене мирлӗ меслетсемпе сӳтсе-йавса йӗркелеме сӗнекен паллӑ ҫӗршывсем хушшинче тӑратпӑр. Епӗр хӗҫпӑшалланассине сахалатассишӗн тӑтӑмӑр. Анчах та, йавӑрлӑхпа тата йӗркесӗрлӗхсемпе тулнӑ тӗнчере, цивилизаци хӑрушлӑхра тӑнӑ ҫӗрте,—ҫак тӗнчере мирпа кӗрешекен кашни ҫӗршывӑн обйазаннӑҫӗ—хирӗҫӳсене мирлӑ татса пама ҫителӗклӗ таран вӑйлӑ оборонӑлӑ пуласси тӑрать.

Ытти ҫӗршывсен прависене хисеплеме шанчӑклӑ пулса, хамӑрӑн правасене хисеплеме ытса, пирӗн хамӑрӑн оборонӑна вӑйлӑ тумала. Тӗнчере договорсен буквисене те, вӗсен шухӑшӗсене те пӑрахӑҫ тӑвас туртӑм палӑрать. Епӗр, ӗлӗкхи пекех, хамӑрӑн договорлӑ обйазателствӑсене пӑхӑнма шутлатпӑр, анчах епӗр ҫак договорсен обйазателствисене ытти ҫӗршывсем пӑснипе майса тӑма пултараймастпӑр. Договорлӑ обйазателствӑсене пӑсасси демократилӗ формӑсенчен урӑх майсем ҫине куҫас туртӑм пур пирки пулать. Ҫавӑнпа та мирлӗ саманана тӗнчери государствӑсем хушшинче килӗшӳсем туни тӑрӑх сыхлани демократилӗ правителствӑсен аллинче шанчӑклӑ май пулнӑ пек туйӑнать мана. Урӑх сӑмахсемпе каласан, мирлӗ саманана пуринчен ытла демократине пӗтерни йе пиҫӑсан та демократи пулман ҫӗршывсем хӑратаҫҫӗ.

Епӗ „туртӑм" сӑмаха каларӑм, мӗншӗн тесен, епӗ халӗ те цивилизацилӗ обшчествӑри сын, государствӑна тытса тӑрас ӗҫе тата ытларах активлӑн хутшӑнасса, вӑл ӑна тӑвасшӑннипе ӗненсе тӑратӑп. Пирӗн халӑх тӗнчери демократине малашне те пуласса, демократипе пӗтерни ҫӗрте ӑна ҫӗнӗрен тӑвасса, ку тарихчен демократи пулман ҫӗрте вӑл пуласса, шанса тӑратӑп.

Шалти лару-тӑру ҫинчен калама тытӑнса, Рузвеьт Америкӑри фермӗрсен чи пысӑк хисепӗ шутсӑр чухӑн пурӑнать тесе каланӑ. Вӑл конгреса, хаксене тытса тӑрас майпа, фермӗрсене йалхуҫалӑх продукцисен производствине йӗркелеме май паракан саккуна йышӑнма сӗнчӗ. Малала Рузвеьт рабочисен ӗҫукҫине хӑпартма кирли ҫинчен каланӑ. „Промышленнӑҫри мӗлйуншар рабочисем,—тенӗ Рузвеьт,—ӗҫукҫи шутсӑр сахал илеҫҫӗ, вӗсем тавар илме пултараймаҫҫӗ. Вӗсем ҫителӗклӗ тарах апат ҫиме май ҫук пирки, йӗркеллӗ пурӑнмалли условисем тата хӑйсен сывлӑхне тытса тӑма май ҫук пирки, пысӑк йывӑрлӑх тӳсеҫҫӗ.

Рузвеьт чи сахал ӗҫукҫине мӗн чухлӗ пулмаллине тата чи нумай ӗҫкунӗн вӑрӑмлӑхне палӑртакан саккуна майлӑ каланӑ. Ҫак вӑхӑтра вӑл хӑшпӗр квалификацилӗ рабочисене, уйрӑмах строителствӑ промышленнӑҫӗнчи рабочисене сехет тӑрӑх тӳлессине чакарас сӗнӗве ҫӗнӗрен панӑ. Малала Рузвеьт хӑшпӗр налогсене, уйрӑмах „пӗчӗк предпринимателсене" сийен кӳрекен, ҫавӑн пекех тавар, апатсимӗҫ илме пултарайман халӑх ҫине йӑвӑр тивекен налогсене ҫӗнӗрен пӑхса тухассишӗн каланӑ.

Правителствӑна шултӑра промышленниксем хушшинчи ҫыхӑну ҫинчен каласа, Рузвеьт конгреса шултӑра монополисен ултавлӑ ӗҫӗсене пӗтерме сӗнчӗ. Шултра монополисен ултавлӑ ӗҫӗ—налог хурас ӗҫрен пӑрӑнни, биржӑри хаксене хӑйсене майлӑ выьатни вак предпринимателсене хӗсни пулать.

(ТАСС).

## Йутҫӗршыв хаҫачӗсем Рузвеьт посланийӗ ҫинчен мӗн ҫыраҫҫӗ

ЛОНДОН, йанварӗн 4-мӗшӗ. Рейтер телеграф агенстви Рузвеьт посланине Англири авторитетлӑ ҫынсем лайӑх шухӑшпа йышӑнса илчӗҫ тесе пӗлтерет. Президент Рузвеьтӑн уҫӑ сӑмахӗсемпе Лондонра кӑмӑллӑ пулчӗҫ тесе ҫырать агенствӑ.

ПАРИЖ, йанварӗн 4-мӗшӗ. Франци хаҫачӗсем „Рузвеьт посланийӗ пирки нумай ҫыраҫҫӗ. Хаҫатсем Рузвеьт посланийӗнче „Муссолини Йевропӑ „пурпӗрех" фашисланать" тесе мухтанса калани тӑтӑклӑ ответ панине кураҫҫӗ. Америкӑри „Пӗрлешӳлӗ Штатсен президенчӗн посланийӗ татӑклӑ шухӑшлӑ пулнине палӑртаҫҫӗ.

Табуи „Евр" хаҫатра ҫырнӑ шухӑш тӑрӑх, Йевропӑрӑ демократилӗ державӑсем, вӑрҫӑ пулас пулсан, хӑйсемпе йунашар Америка пуласси шанма пултараҫҫӗ, тет.

„Йуманите" ҫырать: „Президент Рузвеьт Йапонийе, Германийе Италийе тата тепӗр хут сивлерӗ. Президент фашисӑм вӑрҫӑ пулнине ҫирӗплетрӗ. Рузвеьт хӑйӗн сӑмахӗнче калана тӑрӑх, кивӗ тата ҫӗнӗ ҫӗршывсенчи халӑхран 90 проценчӗн фашисӑмпа вӑрҫӑран ҫӑлӑнмали пӗр май пур. Демократилӗ ҫӗршывсене мир фрончӗ тума хушмала, демократилӗ ҫӗршывсен активлӑ, пӗр шухӑшлӑ фронтне тума хушмала, ҫак фронт пӗччен ҫеҫ вӑрҫӑ пуҫаракансен фашисла сойузне ҫӗнтерме пултарать".

(ТАСС).

## Китайри вӑрҫӑ

### *Вӑтам Китайра*

ШАНХАЙ, йанварӗн 4 мӗш. Тӗп фронтра ҫапӑҫусем малала пыни ҫинчен йулашки талӑксенче пӗлтерӳсем пулман. Китай пичечӗн сведенийӗсем тӑрӑх, йулашки вӑхӑтра вӑтам Китайӑн чылай районӗсенче Йапони ҫарӗсен тылӗнчи Китайри партизансен отрйачӗсем активлӑ ҫапӑҫаҫҫӗ. „Хуамейваьбао" хаҫат кӑтартса пана тӑрӑх, Шанхай—Нанкин—Ханчжоу районӗнче Йапонин пулӑшакан чаҫӗсем тата 200 пине йахӑн салтак тӑраҫҫӗ пулин те, ҫапах вӗсем пурте пӗр ҫӗре, нимрен ытла чукунҫул тӑрӑх пухӑннӑ. Чукунҫулсенчен айакри районсене Йапони ҫарӗсем пыма хӑраҫҫӗ.

### *Кӑнтӑр Китайра*

ЛОНДОН, йанварӗн 4 мӗш. Йапонецсем Кӑнтӑр Китай хӗрри тӑрӑх ҫапӑҫусем пуҫарма тӑнӑ майпа, Гонконгра вырӑнти Англи влаҫӗсене чи сарлака правасем паракан чрезвычайнӑй мерӑсем туса иртерме пӗлтернӗ. Влаҫсене цензурӑ, арӗслӳ тата шанчӑксӑр пек туйӑнакан ҫынсене судсӑрах наказани пама, ҫапӑшкалах тата пурлӑха, транспорта, складсене тытса илме тата пур ҫурта та малтан асӑрхаттармасӑрах ухтарма права параҫҫӗ

## Франци пичечӗ Йапони пирки

ПАРИЖ, йанварӗн 4-мӗшӗ. Йапонин шалти ӗҫсен министӑрӗ адмирал Суецугу, Йапони фашисӑмӗн империалисӑмла аппетичӗсене ҫийеле кӑларакан ҫӗнӗ зайавлени пани пӗтӗм Франци пичетне хӑй ҫине пӑхтарнӑ. Влаҫ пуҫӗнче тӑракан правителствӑ членӗ ҫапла тухса калани халиччен пулман, тесе палӑртаҫҫӗ хаҫатсем.

„Попӳлер" ҫапла ҫырать: „Суецугу программи хӑйӗн аннлашӗпе тата ирсӗрлӗхӗпе Танака 1927 ҫулта туна паллӑ планран та иртсе кайать".

„Хӑй ӗнтӗ,—тесе ҫырать хаҫат,—Йапони Китайра „карательнӑй експедици" мӗншӗн туни те паллӑ. Вӑл хӗвелтухӑҫӗнчи государствӑсене хирӗҫ тӑвакан хӗреслӗ походӑн пӗррӗмӗш тапхӑрӗ ҫеҫ пулса тӑрать.

Мӗнле пулсан та, адмирал Суецугу зайавленийӗ Йапонин деятелӗсем Китайри вӑрҫӑ „коммунисӑмсене хирӗҫле" характерлӗ тесе пӗлтернине пӗтерсе тӑкать йе пӗтерсе тӑкма тивӗҫлӗ. Йапони Китайра ирттерекен пӗтӗм вӑрҫӑсем, коммунисӑма хирӗҫ кӗрешни мар, Англипе францийӗ хирӗҫ, ҫак государствӑсене Ази континенченчен кӑларассишӗн кӗрешни пайантан йышӑннӑ йӗркесем тӑрӑх паллӑ.

Вайӑ ытларах уҫӑ та ытларах паллӑ пулса тӑрать. Мӑскӑсем хывӑнса ӳкеҫҫӗ тата, вӑл хӗвелтухӑҫӗнчи демократине Инсет-Хӗвелтухӑҫӗнче килсе тухнӑ лару-тӑрӑва лайӑххӑн хаклама пулӑшӗ".

„Эвр" хаҫатра Табуи ҫырнисем тӑрӑх, Йевропӑри государствӑсем, Йапони Китайа ҫӗнтерессине шанмаҫҫӗ. Йапони ҫар лидерӗсем кампани умӗнче пысӑк хӑрушлӑх курчӗҫ, ҫав хӑрушлӑх вӗсене халиччен йулнисенчен те ытларах ӑссӑрлӑхсем ҫине тӗксе йама пултарать" тесе шутлаҫҫӗ.

ПАРИЖ, йанварӗн 4-мӗшӗ. Францири пичет Йапонин шалти ӗҫсен министӑрӗ адмирал Суецугу Йапонири „Кайдзо" журнал сотрудникне пана интервйу ҫинчен ҫырать. Ҫав интервйура Суецугу Йапонин Инсет-Хӗвелтухӑҫӗнчи планӗсем ҫинчен уҫӑнах каласа парать. Йапони пуканеле правителствӑсене, Ҫурҫӗрти Китайра ҫеҫ мар, Кӑнтӑрти Китайра та тӑвас плансене уҫса парса, Суецугу ҫапла пӗлтерет, „пире императорла хушу панӑ тӑрӑх, шурӑ нацисен Инсет-Хӗвелтухӑҫӗнчи интересӗсем „Йапони миҫҫийӗ" умӗнче кайала чакмала. Китай, Манчжоу-Го тата Йапони пӗрле „политикӑла, економикӑлӑ тата идеологилӗ блок" тумала.

Малала „Йапонин миҫҫийӗ" ҫинчен каласа, Суецугу ҫапла пӗлтернӗ: „сарӑ рассӑ хӑйне пӗлӗт пана телейе тупса илӗ, шурӑ рассӑсем пуҫ пулҫа тӑни пӗтӗ. Шурӑ рассӑсем сарӑ рассӑсем ҫине хунӑ пусмӑр пӗтме тивӗҫлӗ. Паллах, ҫав ирӗке тухассине часрах пурнӑҫлассси пӗтӗмӗшле ӗшӗлӳ, ҫын вӗлерӳ патне илсе ҫитерет, епӗр мӗнле сыхланас мерӑсем йышӑнсан та результачӗ пурӗпӗр пӗрре пулать: пӗтӗмӗшле ӗшӗлӳ, мӗншӗн тесен телей хӑй сакна кӗтет. Чи кирли вӑл, епӗр хамӑр миҫҫийе, иккӗмӗш вырӑнти шухӑшсем ҫинче чарӑнса тӑмасӑр пурнӑҫласси пулать.

„Китай хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкас тесен,—тенӗ малала Суецугу,—Англи Китайа пулӑшнине тен вӑрҫӑ хакӗпе те пулин чармала.

(ТАСС).



ССР Союзӗн Оборонӑ Халӑх Комиссарӗ, Совет Союзӗн Маршалӗ Климент Йефремович Ворошилов—Минск суйлав округӗ тӑрӑх (Белорус ССР) Союз Совечӗ депутата суйланнӑ.

(Союзфото).

## Испанири фронтсенче

Йанварӗн 2 мӗшӗнче республикӑ ҫарӗсем штурмласа Теруелри граждан влаҫӗсен ҫуртне йышӑнса илнӗ. Ку ҫуртра йулашки вӑхӑтченех Теруелри фашиссен гарнизонӗн йулашкийӗсем тӑнӑ.

Теруел районӗнче ҫапӑҫма чаракан вӑйлӑ ҫил-тӑвӑл алхасать. Ҫапӑҫусем чакнӑ.

Йанварӗн 2-мӗшӗнче Германин чылай самольочӗсем республикӑ позицийӗсем ҫине тапӑнма тӑнӑ. Ҫанталӑк начар пулнипе самольотсен ирӗксӗрех айаларахран вӗҫме тивнӗ. Республикӑн зенитлӑ батарейӗсем вӑл самольотсем ҫине пенӗ. Пӗр самольочӗн ирӗксӗрех республикӑ территорине анмала пулнӑ, ыттисем кайала тарнӑ.

Теруелрен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫӗнче республиканецсем Муела де Теруел йалӗ районӗнчи позицисем пайне тепӗр хут ҫапӑҫса илнӗ. Вӑл ҫапӑҫура вӗсем икӗ пулемет тата алӑ винтовкӑ тытса илнӗ.

Теруел сывӑхӗнчи ҫапӑҫура фашиссем пысӑк ҫухату тунӑ. Англи пичечӗн сведенийӗсем тӑрӑх, йулашки кунсем хушшинче фашиссем йенче вилнисем 8.000 ҫын шутланать.

(ТАСС).

## Германири политикӑлӑ процессем

ПРАГА, йанварӗн 4-мӗш. „Паризер Тагесцейтунг" хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Гамбургра суд процесӗ пулса иртнӗ. Вӑл процессра Германири социал-демократла тата коммунисла парти членӗсем пулнӑ ушкӑна „хаьхи йӗркене ҫапса сирпӗтме" пӗрле хатӗрленнӗшӗн, „Мускавран тата Германири вӑрттӑн радиостанцинчен радио итленӗшӗн" айӑпланӑ. Айӑпланакансем, процес вӑхӑтӗнче, вӗсене суд пуличчен тӗрмене хупсан питӗ хытӑ асаплантарни ҫинчен каланӑ. Вӗсен ӗҫӗпе чӗннӗ свидетелсем айӑпланакансен хутне кӗрсе каланӑ. Айӑплама фактсем ҫителӗксӗр пулин те, суд, темиҫе сехет хушши тӑсӑлнӑ лару хыҫҫӑн, вунпӗр айӑпланакансем саккӑрӑшне пӗр ҫултан пуҫласа икӗ ҫул ҫурӑ таран тӗрмере ҫирӗп хупса усрамала тата виҫӗ ҫул таран граждан прависӗр хӑвармала приговор йышӑннӑ. Хаҫат кӑтартса пана тӑрӑх, суд хӑйӗн приговорӗнче „айӑпланакансен оппозицилӗ шухӑшӗ вӗсем политикӑла ӗҫсем туни пирки иккӗлентермест. Вӗсем радиона мӗн итленине халӑха каласа парса, ыттисене те радио итлес килекен тунӑ"—тесе ҫырнӑ.

(ТАСС).

## Йапони агреҫҫийӗ

ЛОНДОН, йанварӗн 3-мӗш. Ексчейндж телеграф агенствин Гонконгри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Гонконгран 40 километртра Макаопа Шеккай хушшинчи Жемчужнайа йуханшыв тинӗсе йухса тухнӑ ҫӗрте йӳпленсе кайса пулнӑ утравсем ҫинчен питӗ нумай беженцӑсем Макаона пыраҫҫӗ. Йапонин виҫӗ крейсерӗ тата темиҫе транспорт ҫав утравсем ҫине Йапони ҫарӗсене илсе пырса антарса хӑвараҫҫӗ.

„Дейли експресс" хаҫатӑн Гонконгри корреспондӗнчӗ—Йапони пӗлтерӳвӗсем тӑрӑх ҫапла кӑтартса парать: Гонконгӑн икӗ йенче те темиҫе вырӑна Йапони десанчӗ антса йулнӑ. Тайчан заливӗнче, Англи шывӗн чиккинче, Йапонин темиҫе карапӗ курӑнать. Йапонецсем ҫавнашкалах тата Биас заливӗнчи Грин тата Перроу утравӗсене тытса илнӗ, вӑл утравсем ҫинче пурнакан китайецсене аеродром валеьи ҫӗр тикӗслеттерме ирӗксӗрлеҫҫӗ.

Китай пӗлтерӳвӗсем тӑрӑх, Йапони миноносцисем Гуандун ҫыранӗсем ҫывӑхӗнче Китай киммисене 80 штук шыва путарнӑ. Китай пулӑҫисем 100 ҫын ытла пӗтнӗ.

(ТАСС)

## Лейбориссен делегацийӗ Испанине кайнӑ

ЛОНДОН, йанварӗн 3-мӗшӗ. Пайан, Испани правителстви чӗннӗ тӑрӑх, Англи парламенчӗн членӗсен—лейбориссен пӗррӗмӗш делегацийӗ Испанине тухса кайнӑ. Делегацире 9 ҫын.

# Çитес çулта тата нумайрах тырпул туса илмеле

Иртнĕ 1937 çулта Вăрмар районĕнче чылай колхозсем хальччен пулман вăйлă тырпул туса илчĕç.

Тикашри „Большевик" колхоз агротехника ĕçĕсене вăхăтра пурнăçласа пырса тата çĕре çемçетмелли йапаласемпе тĕрĕс усă курса, хальччен курман, асаттесем астумалли вăйлă тырпул туса илчĕ. Колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 105 пăт тĕштырă илчĕ: урпа 160 пăт, кĕрхи тулă 120 пăт, сĕлĕ 120 пăт, пăрçа 105 пăт пулнă.

Паллах, çакнашкал пысăк тухăçлă тырпул хăй тĕллĕн пулман. Ăна туса илессишĕн колхоз 1937 çулта хĕлле хĕлĕпех ĕçленĕ. Çуртсири акмалли лаптăк çинче пĕтĕмпех йур тытнă пулнă, 5680 лав тислĕк, 1000 лав ытла хура тăпра каларнă, 210 центнер çĕре çемçетмелли тĕрлĕ минерал çăнăхĕсем çапнă.

Уйхир ĕçĕнче бригадăпа бригадă, звенопа звено, уйрăм колхозниксем ăмăртса ĕçлесе пур ĕçе те вăхăтра туса пынă. Авăн çапас ĕçе октябрĕн 25-мĕш тĕлне пурнăçланă, халĕ колхоз тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пама тытăннă.

Колхоз ĕçĕнче тăрăшса ĕçлекен колхозниксен кĕлечĕсем тырăпа тулса ларăççĕ. Ватă колхозник Л. Данилов хăй пĕччен ĕçленипе 190 пăт тĕштырă илет. Çемйипе вăл 430 пăт тулă илет. Максимов Ларион хăйĕн çемйипе 500 пăта йахăн тĕштырă илет. Çакнашкал тырă нумай илекенсем шучĕ „Большевик" колхозра чылай пысăк. Вĕсем пурте колхоз пуличчен ун чухлĕ тырă çинчен шухăшламан та пултарайман. Патша самăнинче вĕсем çителĕклĕн çăкăр та çиме пултарайман. Колхоз пурнăçĕ вĕсене тулли, культурăллă, пуйан пурнăç туса пачĕ. Çавăнпа та вĕсем кашни колхоз пурнăçне ырласа, колхоз туса паракан аслă Сталина тав тăваççĕ.

Колхоз „Большевик" çитес çул татах вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешет. Выранти çĕре çемçетмели йапаласене пухать, уйа 1000 лава йахăн тислĕк каларнă, 50 центнер тĕрлĕ минерал çăнăх илсе килсе хунă.

# Опытсем тăвассине сарса пырар

Вăрмар районĕнчи колхозсенче чылай опытниксем нумайранпа ĕнте тĕрлĕ опытсем туса тырă тухăçне ÿстермелли майсене аванах кăтартса параççĕ.

„Аниш" колхозри ватă колхозник-опытник Орлов Петр 1932 çултанпа опыт ĕçĕпе ĕçлесе, чылай пысăк çитĕнÿсем турĕ. Çĕре тĕрлĕ минерал çăнăхĕсемпе çемçетсе, пĕр гектартан 700—900 центнер таранччен купăста туса илнĕ.

Орловăн иртнĕ çулта та чылай паха опытсем пулнă. Икĕ çултанпа ĕнтĕ çĕрĕн сухаламалли сийне тарăнлатассине ĕçлет, çак тĕллĕне Орловăн опычĕсем аванах пулчĕç. Пĕр сăмахпа каласан, Орлов хăй ĕçлеме пуçланăранпа нумай паха опытсем туса кăтартрĕ.

Орлов пек колхозник-опытниксем Вăрмар районĕнче сахал мар. „Большевик" колхозри Тимушкинăн, „Арабось" колхозри Беловăн чылай опытсем пур.

Анчах та çак опытсемпе районри ытти колхозсем тырă тухăçне ÿстерес çĕрте çителĕклĕх усă курма пултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен, Вăрмар районĕнче уйрăм опытниксен, бригадăсен, колхозсен çитĕнĕвĕсене ытти колхозсене сарас ĕçе кутаранччен те йĕркеллĕ организацилемен.

Уйрăм колхозсен, опытниксен çитĕнĕвĕсене пур колхозсене те сарас çĕрте колхозри хата-лабораторисем пысăк вырăнта тăраççĕ. Анчах апла пулин те Вăрмар районĕнче çак таранччен çитсе те пĕр хата-лабораторие те организацилемен. МТС-па райçĕрĕç пайĕ 5 çул ĕнте каласăççĕ, анчах каласу каласупах йулат. Тата районта опытниксене çĕре чăрмантарса пыракансем те сахал мар. „Аниш" колхоз председателĕ Йаковлев Орлов опытнике кашни çулах чăрмантарса пырат. Çĕре çемçетмели йапаласене турттарма лаша памаст, ĕçлеме çынсем те памаст, тата хăш чухне опытник Орловăн ăнтăрăтнине те пĕтерес тесе, унăн участокĕнчен пуçтăранах тырра хутăштарса йарса, пĕрле çаптарат. Орлова опытсем тунăшăн шутласа панă ĕçкунĕсене çырса памаст.

Çакнашкалах „Майак" колхозра ревизи комиссийĕ пулса ĕçлене халăх тăшманĕ Туймедов нумай чăрмантарса пынă. Вăл халăх хушшинче опытниксем пирки тăшманла сăмах сарма тытăннă. Çакнашкал йапаласем ытти колхозсенче те пулкаланă.

Вăрмар районĕнче малашне опыт ĕçне лайăхрах организацилемелле. Опытниксем туса кăтартнă çитĕнÿсем пур колхозсемшĕн те лайăх пример пулса тăмала, районта хата-лабораторисем организацилемелле.

А. Васильев.

# Вайла тырпулшăн кĕрешеççĕ

Вăрмар районĕнче чылай колхозсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн çине тарсах кĕрешеççĕ.

Авăн çапса пĕтерне колхозсенче вăрлăх фончĕсене суртласа тăсатса, уйрăм кĕлетсене, амбарсене хураççĕ, йалхуçалăх машинĕсене йусаса хатĕрлеççĕ, çĕре çемçетмели выранти йапаласене пухаççĕ.

„Анакасри" Парижская Коммуна" колхоз 500 лав ытла уйа тислĕк кăларса купаланă. Чулкасри „Свобода" колхоз Вăрмар станцинчен тислĕк, кĕл тата фекали турттарат.

Шутнерпуçĕнчи „Октябĕр" колхоз йалхуçалăх машинĕсене йалтах тÿрлетсе çитерне.

Анчах çав хушăрах районра çуракине начар хатĕрленекен колхозсем те пур. Уйрăмăнах Еçпепери „13 лет октября" колхозпа Çĕн Кăвалти „Победа" колхозсенче ĕç начар пырат. Вĕсем халĕ те авăн çапса пĕтермен, вăрлăх фончĕсене суртласа хурасси çинчен шутламаççĕ те.

А. В.

# Партком секретарĕсен тата парторгсен заместителĕсен канашлăвĕ

Йанварĕн 4-мĕшĕнче парти Шупашкар хула комитечĕ пуçламĕш парторганизацисен партком секретарĕсен тата парторгсен заместителĕсен канашлуне иртерчĕ. Канашлура 42 çын пулчĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ парти ĕçне хальтерех кăна хутшăннă.

Çĕрри опытсемпе паллашас майпа канашлу Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çумĕнчи партком секретарĕн заместителĕ Комиссаров йулташăн тата Григорьев (Пединститут), Прокопьева (Чăвашпромсойуз), Кальджанов (Чăвашсойуз) йулташсен докладне итлерĕ.

Докладсене сÿтсе-йавас ĕçе канашлăва пынă ытти çынсем те активлăн хутшăнчĕç. Партком секретарĕсемпе парторгсен заместителĕсем пурĕ 7 çын тухса каларĕç: Вишневский (Выранти промышленнăç халăх комиссариачĕ), Нилов (Шалти суту-илÿ ĕççен халăх комиссариачĕ), Семенов (Государствă планĕ), Федорова (парти Обкомĕ), Петров (Çыхăну управленийĕ), Бызов (Тир-сăран завочĕ) тата Чурилов (парти Обкомĕ) йулташсем.

Канашлура Парти Хула комитечĕ партком секретарĕсен тата парторгсен заместителĕсемпе пачах çителĕксĕр ĕçлени палăрчĕ. Хула комитечĕ çак канашлăва иртерме те çителĕклĕн хатĕрленмен. Канашлу пуласси çинчен начар пĕлтернĕ. Канашлăва пынă çынсем парти хула комитечĕ тĕрĕс критиклерĕç. Вĕсем хула комитечĕ партком секретарĕсен тата парторгсен заместителĕсемпе ĕçлемест, вĕсене ĕçлеме вĕрентмест, тесе палăртрĕç.

Çапах та çакна калас пулат: Парти Хула комитечĕ парти ĕçне хальтерех çĕç уйăрнă йулташсем патне çывăхрах пыма тытăнни—партиле-массăллă ĕçе лайăххине ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрат. ПСК(б)П парти Тĕпкомĕн 1937 çулхи февралĕпе март уйăхĕсенче пулнă Пленумĕн йышăнăвĕсем тăрăх, партком секретарĕсен тата парторгсен заместителĕсемпе ĕçлессине тĕпренĕх улăштармала, вăйлатмала. Вăл парти Хула комитечĕн ответлă задачи пулат. Çак канашлура пулнă çынсем парса хăварнă сĕнÿсене Хула комитечĕн пĕтĕмпех пурнăça кĕртмеле. Парти ĕçĕнчи çĕнĕ кадрсене пулăшу парас ĕçе парти Хула комитечĕн уйрăмăнах вăйлатас пулат.

Й. Посыпкина.

# Заочниксен çеççийĕ

Кăçалхи йанварĕн 1-мĕшенче пединститутра истори, биологи, физикăпа математикă тата литературă факультечĕсенче заочнă вĕренекенсен хĕллехи çиççийе пуçланчĕ. Нумайĕш заочниксем çеççине пысăк хаваслăхпа килчĕç. Анчах институтри заочнă вĕрентес йенĕпе ĕçлекен сектор студентсене кирлĕ пек лайăх кĕтсе илеймерĕ. Çеççине пухас тĕлĕшпе заочнăй сектор начартарах ĕçлерĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ çеççине килме тивеçлĕ 500 çынтан 130 заочник килмесĕр йулнă.

Заочнă вĕренес ĕç çине районри çугĕç пайĕсем те çиелтен пăхаççĕ. Акă уйрăм тĕслĕхсем: Елĕк районĕнчен 40 заочник, Хĕрлĕ Чутайран—30, Çĕрпÿрен 15 килмен.

Студентсем вырнаçмали общежитисене те хатĕрлемен, тасатман. Кăнтăрлапа та, каçхине те общежитинче хурал çук, студентсен йапалисене никам та астуса тămaст.

Заочниксем çак çитменлĕхсене пĕтерме ыйтаççĕ.

А. Нестеров.

# Каникул савăнăçлă иртет

Каçхине, 4 сехет çитсен, шкулăн çÿлти хутĕнчи илемлетнĕ пÿлĕме шкул ачисем пухăнчĕç. Пурте вĕсем савăнăçлă, илемлĕ. Вĕсем çине пăхсан пĕтĕм кăмăл хăпарса кайат.

Пÿлĕм варринче електричествă çутипе йолкă йалтăртатса тăрат. Питех те капăр вăл. Йолкă тавра шкул ачисем кăшăл туса çаврăнна.

Вожатăй, пайанхи йолкă 1938 çул пуçланнă йатпа уçăлни çинчен пĕлтерсе, ун çинчен кĕскен каласа парат. Вожатăйăн: „ачасем, каникул хыççăн пурте „отлично" вĕренĕр!"—тенĕ йулашки сăмахĕсене хирĕç, ачасем пĕр харăссăн „отлично!" тесе ответлеççĕ.

Йолкă пуçланат. Малтанах, йолка умне 1-мĕш класра вĕренекен 8 çулхи Шевелдина тухса тăрат. Майĕнче унăн хĕрлĕ галстук. Çийĕнче таса костюм. Пĕр васкамасăр вăл „Елочные игрушки" сăвва каласа парат. Ун тавра тăракан ачасем пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Каласа пĕтерсен хыттăн алă çупаççĕ.

Шевелдина хыççăн йолкă умне 9 çулхи Кузнецова тухат. Вăл „Зима" йатлă сăвва вуласа парат. Унтан пĕрин хыççăн тепри: Манышева—„Елка", Галйамов—„Мечта", Йефремова—„Подарок Сталину", Горохов—„Испания" йатлă сăвăсене каласа параççĕ. 9 çулхи Гальăпа 8 çулхи Петă „Цыганочка", Волотă „Яблочко" ташăсене ташласа кăтартаççĕ. Унтан карталанса йурăсем, пĕрлешÿлĕ ташăсем, вăййăсем пуçлаççĕ.

Вăхăт шăпах икĕ сехет иртет. Акă алăкран „Дед Мороз" кĕрет. Вăл шап-шурă, йур тĕслех. Сăнĕпуçĕ те вăтă çынăнни пекех. Вăрăм сухаллă. Аллинче пысăк корзинкă. Дед Мороз" ачасемпе паллашнă хыççăн, кĕске калаçу иртерет. Йулашкинчен ачасене пурне те çĕнĕ çул пуçланнă йатпа тутлă йышши çимели йапаласем валеççе парат.

Çапла иртрĕ йолкă Çĕмĕрле хулинчи Пушкин йачĕпе тăракан шкулта.

Кун пек çĕнĕ çул йолкисем Çĕмĕрлере кашни шкулта кашни ача йăслинчех пулса иртрĕç. Йанварĕн 2—3-мĕшĕнче асларах классенче вĕренекенсен йолкисем пулчĕç. Пур çĕрте те ачасем йолкăсене пысăк уйав пек, тулли кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

Хĕллехи каникул савăнăçлăн иртет. Каникул вăхăтĕнче шкулсем пысăк хуласене екскурсисене кайаççĕ. Хăшĕсем колхозсене, предприйатисене кайаççĕ. Таса сывлăшра конькипе йĕлтĕрпе йăрăнаççĕ.

Туллимар вăтам шкулта VI—VII-мĕш классенче вĕренекенсем, йанварĕн 4-мĕшĕнче „Сталинла Конституци" йатлă темăпа бал-маскарад иртерчĕç. 7-мĕшĕнче Мыслец йалне кайса, спектакль лартса параççĕ. 8-мĕшĕнче пурте шкула пуçтарăнса „раштав" çинчен лекци итлеççĕ т. ыт. те. Çак каникул вăхăтĕнчех туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ И. В. Новиков йулташпа тĕлпулса калаçу иртереççĕ.

Куйбышев йачĕпе тăракан шкулта вĕренекенсем каникул вăхăтĕнче „ГТО" значокĕн хĕллехи нормисене пурне те парассишĕн тăрăшаççĕ. Физкультурă инструкторĕ Бритиков йулташ кашни кунах ачасенчен нормăсем йышăнат. Унăн тĕп ĕçĕ пĕтĕмпех ачасемпе ĕçлесси.

Кунсăр пуçне тата вăтам шкулсенче вĕренекенсем рабочисем патĕнче концертсем туса иртереççĕ. Вĕренекенсен Лебедев йулташ йĕртсе пыракан хорĕ радио умне тухса йурламала.

„Большевик" завод администрацийĕ шкул ачисене вальди йатарласах каток тутарчĕ. Кун пек каток çак кунсенче районти стадионра уçăлчĕ. Унта ачасем йаланах йăрăнаççĕ. Кино-театр та ачасене йатарласах кино-картинăсем кăтартат.

Каникул савăнăçлăн та илемлĕн иртет. Каннă хыççăн вĕсем каллех хастарлăн вĕренме пуçлаççĕ.

Хар. Лисин.

# Мухтавлă ухатник

ВĂРНАР. Мăн Йавăш йалĕнчи ухатниксем—Илйа Васильевпа Аркадий Николайев декабĕрĕн 3-мĕшĕнче мулкач тытма тесе ухатана тухса кайнă. Пĕри пăшал илнĕ, тепри лаша çине утланнă.

Анчах А. Николайев, лаша утланса мулкач хăвалама тухнăскер, кашкăрсем курнă. Унăн аллинче пăшал тавраш пулман. Кашкăрсем вырăнчи çинчен вăл часрах хăйĕн йулташне систернĕ. Илйа Васильев, лаша хÿттипе йăпшăнса пырса, кашкăрсем патне çывхарнă. Пăшалран виçĕ хутчен персен, кашкăра ураран амантнă. Анчах урăх пеме май пулман, мĕншĕн тесен, йулашкинчен пенĕ гильзă çурăлса кайнă, пăшала тепĕр хут авăрлама май килмен. Аманнă кашкăр ухатнике хирĕç çывхарса пынă. Мĕн тăвас? Васильев нумайах шухăшласа тăмаст, вăл кашкăра хирĕç пăшал кĕпçипе хăмсарса кĕрешме тытăнат. Кашкăр уйăрălса кайат. Çав вăхăтра Васильев çурăлса кайнă гильзăна кăларса пăрахат те, тата икĕ хут авăрласа перет. Çапла вара кашкăр амине тытаççĕ.

М. Андрейев.

ЧАССР 15 çул тултарнă йатпа тăрак н садри йолкă (Шупашкар хули).

Цыганов фотоÿкерчĕкĕ.

*А. Азизйан*

# Ленинла-Сталинла кооперативла план çĕнтерĕвĕ

(В. И. Ленин „Кооперации çинчен" çырнă статйа 15 çул тултарнă тĕле)

„...Непла Российăран социалисăмла Российе пулĕ",—тесе пĕтерне хăйĕн сăмахне В. И. Ленин 1922 çулта Мускав совечĕн пленумĕнче. Çак хавхалантаракан пророкла сăмахсем, пирĕн çĕршывра социалисăм тума май пуррине пысăк вăйпа ĕнентерекен сăмахсем, халĕ чĕрĕ, пурнăçри чăнлăх пулса тăчĕç. Социалисăмла обществăн аслăран та аслă çутрне туса лартнă. Ăна Сталин йултăш йертсе пынипе тунă, ăна халăх тăшманĕсемпе хайарран кĕрешсе, Ленин кăтартса панă программăна çирĕп тытса пынипе тунă. Ленин программине Сталин йулташ пуйанлатса ăна пурнăça кĕртес ĕçе йертсе пынă. Çак чаплă кĕрешĕвĕн итогĕсене Сталинла Конституцире çырса хунă.

1923 çулта, йанварпа февраль уйăхĕсенче, Ленин хăйĕн йулашки статйисене: „Дневникрен илнĕ страничкăсем", „Кооперации çинчен", „Пирĕн революци çинчен", „Рабкрина пирĕн мĕнле урăхлатмалла", „Сахалтарах пултăр та лайăхрах пултăр" йатлă статйисене чирлĕ вăхăтра каласа çыртарнă. Çав статйасенче тапратнă ыйтусем социалисăмла революцин малашнехи вăхăтри аталанăвĕнче питех те кирлĕ ыйтусем пулнă. Çак статйасем пурте Ленин малтанхи вăхăтсенче каланă пур сăмахĕсемпе таччăн çыхăнса тăраççĕ, пĕтĕмпе пĕрле вĕсем пирĕн çĕршывра социалисăм тума çул кăтартса паракан пĕрлĕх программă пулса тăраççĕ.

Ленинăн „Кооперации çинчен" çырнă статйа—колхоз стройĕн çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре питех те пысăк документ пулса тăрат. Совет Сойузĕн гражданĕсем халĕ ĕнтĕ социалисăмла революцин пĕтĕм тĕнчипе историлĕ çĕнтерÿвĕ çинчен—мĕнйуншар хресчен хуçалăхсене коллективлани çинчен мухтавлăн калаçаççĕ.

Ку çĕнтерĕве илме çăмăл пулман. Хресченсене колхоза кĕме хатĕрлесе çитерĕс тесе, Ленин—Сталин партийĕн сахал мар ĕçлемеле пулнă. Вак хуçалăхла хресченсене кĕлмĕçлĕхрен, чухăнлăхран хăтарас, пуçпулса тăракан буржуазиннен йулнă йал пурнăçĕн идиотисăмне пĕтерес ĕçре кооперативлă формăпа усă курма кирлине Маркспа Енгельс малтанах кăтартса панă. Вак хуçалăх пуçпулса тăнă вăхăтра çĕр ĕçĕнче етемлĕх вăй-халĕ ÿссăр сайа кайат. Ĕç хатĕрĕсем сапаланчăк, ĕçе тăвакансем те хăйсем тĕллĕн уйрăм. Хресчен йавăр ĕçре асап курат. Çĕр влаçĕ ăна татăк çумне çыхăнтарат, унтăн тĕлĕнмелле пысăк пусмăра тÿссе пурăнат. Вак хуçалăхла çĕрĕçĕ хресченсене чухăнлăхпа выçлăхран хăтарма пултараймаст. Вак хуçалăхсене пĕрлештерни кăна хресчене чухăнлăхпа выçăлăхран хăтарат.

Капитал пуçпулса тăнă чухне кооперации хресченсене капитал експлоатацинче тытмали формăсенчен пĕри пулса тăрат.

Кооперативла предприйатисем капиталисăмла харпăрлăхлă предприйатисемпе пĕрлешсе кайса вĕсен политикине пурнăça кĕртсе пыракансем пулса тăраççĕ.

Çавăнпа та Ленин „Кооперации çинчен" çырнă статйара кивĕ кооператорсем (Роберт Оуен, т. ыт.) ĕмĕтленни—социалисăмла обществă тума ĕмĕтленни рабочи клас политикăла влаçа çĕнсе илмесĕр пурнăça кĕме пултарайманнине кăтартса панă.

Кооперации—рабочи клас диктатуринче кăна, çĕре, банкăсене, пысăк индустрине национализацилесен çеç, йертсе пыракан çуллĕхсене рабочи клас аллине илсен çеç, рабочи клас економикă тĕлĕшĕнчен хăйĕн сойузникĕпе—хресченпе çыхăнăва йĕркелесен çеç социалисăм çулĕпе илсе пымали канал пулса тăрат. Хресченсене социалисăмла çулпа илсе пырас тĕни мĕне пĕлтерет-ха? Йединоличник-хресченĕн ĕмĕрсем хушшинче çирĕпленсе йулнă вак харпăрлăхла психологине мĕнле улăштармала-ха? Ăна пысăк машинăлă техникă никĕсĕ çинче тытăнса тăракан пĕрлешÿлĕ пысăк хуçалăх çине куçарсан анчах улăштарма пулат, тесе вĕрентеççĕ Ленинпа Сталин.

Вак харпăрлăхла психологилĕ йединоличник-хресченсене матери алă базă кăна, машинсемпе массăлăн усă курни кăна çĕнĕле воспитани пама пултарат.

Анчах Совет республикин аталанăвĕн малтанхи тапхăрĕсенче йалхуçалăхне техникă тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарма çавăн пек материалă базă пулман.

Вак хресчен хуçалăхĕсем ытларах вырăн йышăнса тăнă условисенче, колхозсемпе совхозсем вак-таварлă индивидуалла производствăн тинĕсĕсенче пĕчĕк утравсем пек кăна пулса тăнă условисенче пур тĕслĕ кооперации те (потребител, сбытпа снабжени т. ыт.) хресчене кооперацин çÿлĕ формине—коллективлă производствăна куçма пуринчен çăмăл формă пулса тăнă. Ленинла-Сталинла кооперативла планăн уйрăмлăхĕ çакăнта: рабочи клас, социалисăм вăйĕ ÿссе пынă çемĕн, хăйĕн йертсе пыракан позицийĕсем çирĕпленсе пынă çемĕн, хресчене кооперацин айалти формисенчен çÿлĕ формисене куçарса пырат.

„Ленинла кооперативла плана пурнăçа кĕртсе пырасси,—тесе çырат Сталин йулташ,—вăл хресченсене сбытпа снабжени кооперацийĕнчен производствăлă кооперацине, калăпăр, колхозлă кооперацине çĕклесси пулат".

Колхозсенче халĕ производствăна пирĕн кооперациленĕ, пĕтĕм ĕç хатĕрсене пĕрлештĕрнĕ.

Ленинăн „Кооперации çинчен" çырнă статйан уйрăмлăхĕ çакăнта: унта кооперативлă планăн пĕтĕм йĕрне пăхса тухнă. Ленин хăйĕн статйинче кооперацине анлăн сарма ĕненнĕ, йала социалисăмла çĕнетме программă палăртса панă. „Цивилизатăрла кооператорсен стройĕ,—тесе çырнă Ленин,—производствă ĕçхатĕрсем обществăлă харпăрлăх чухне, пролетариат буржуазине çĕнтерне чухне—вăл социалисăмла строй пулат".

Парти, Сталин йулташ йертсе пынипе, социалисăм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешĕве тухрĕ.

Троцкисла-бухаринла бандă урса кайса хирĕç тăнă пулсан та, парти, Сталин XIV-мĕш сйесра каласа панă индустриализаци программине пурнăça кĕртрĕ. Социалисăмла индустриализацин сталинла программи пирĕн çĕршыва техникăла економикă тĕлĕшĕнчен никама пăхăнса тăмала мар туса хума май пачĕ, пĕтĕм халăх хуçалăхне, çав шутрах пĕтĕм йалхуçалăх производствине социалисăмла çĕнетме тĕп никĕс пулса тăчĕ. Ку программă çĕршывăн оборонă тĕрекне çирĕплетмели никĕс пулса тăчĕ.

Социалисăмăн материалă никĕсне ăнăçлăн туса хунă. Производствăн коллективла формисен усăлăхне хресченсем хăйсен опычĕ çинче ăнланса илчĕç. 1929 çулта хресченсем йышлăн колхоза кĕме тытăнчĕç. Вăл аслă улшăну çулĕ пулнă: колхозсене чухăнсем хыççăн вăтам хресченсем кĕме пуçларĕç. Сталин йулташ: кулаксем клас пулса тăнине пĕтересси çинчен панă лозунг рабочи клас диктатурин аталанăвĕнче çĕнĕ страницă уçрĕ.

Коллективизаци ĕçне никам хирĕçлеме пултарайми Ленин принципĕсем тăрăх туса пынă. Ленин „Кооперации çинчен" тенĕ статйара хресченсене простă, çăмăл майсемпе çĕнĕ йĕркесем патне илсе пымала, тесе кăтартса панă.

Коллективизаци ĕçне ирĕклĕ принципсем тăрăх туса пынă.

Хăшпĕр çĕрте çара пыфăрсем хыççăн хăваласа хресченсене колхоза кĕртес тĕлĕшпе йурăхсăр меслетсемпе ĕçлеме тытăннине курсан, Сталин йулташ „Çитĕнÿсем пирки пуççавăрăнни" йатлă статйа çырса кăларчĕ. Вăл статйа административлă майсемпе иртĕнекенсене йĕркене кĕртрĕ. Сталин йулташ кăтартса пани коллективизаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме, колхоз йухăмĕнче вăйлă çĕнтерÿсем тума май пачĕ.

Колхозсене çирĕплетессинче машинпа трактор станцисем пысăк вăй пулса тăчĕç. Партин XV-мĕш сйесĕнче, коллективизаци сйесĕнче, Сталин йулташ машинпа трактор станцисем тăвасси çинчен шухăш кăларса тăратрĕ.

Сталин йулташ йалхуçалăхне техникă тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарассине пур майпа та вăйлатас шутпа çак станцисен вăл вăхăтра пулнă опычĕсемпе пысăккăн усă курма хушрĕ.

МТС тăвас идейă тĕрĕсси пурнăçра питех те лайăх курăнчĕ.

Ленин „Кооперации çинчен" çырнă статйара уйрăм производителсен харпăрлă интересне государствă интересĕпе çыхăнтарма пĕлес пулат, харпăрлă интереса обществăлă интересне пăхăнтармала, тесе кăтартса панă. Йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставе çак принципа пурнăçа пĕтĕмпех кĕртме май пачĕ. Колхозсене çирĕплетмели усă—колхозникăн харпăрхăйĕн интересĕсене колхозăн обществăлă интересĕсемпе çыхăнтарнинче, харпăрхăй интересĕсене обществăлă интересĕсемпе килĕштернинче, тесе Сталин йулташ пĕрре мар каланă.

Ленин „Кооперации çинчен" çырнă статйара çапла çырнă: „Кашни обществăлă строй финанс йенĕпе

# „Колхоз йалавĕ“ хаçатпа Осипов йулташăн позицийĕ

Йелчĕк районĕнче чылай çулсем хушши тăшмансем хăйсен сăтăрлă ĕçĕсене туса пынă.

1930 çултан пуçласа 1934 çула çитиччен ПСК(б) Парти райкомĕн секретарĕнче троцкис Кузьмин М „ĕçленĕ“. Кузьмин троцкиспа пĕрлех ПСК(б)П райкомĕнче кулътпроп пайĕн пуçлăхĕнче Данилов националис ларнă. Çав вăхăтсенчех райĕçтăвком председателĕн заместителĕнче белогвардейец Садовников пулнă.

Районран чип-чиперех тухса каймалла ĕлкĕрнĕ тăшманла етемсем: А. Дмитрийев, И. Филиппов, М. Гаврилов колхоз йухăмне ÿсме чарас тĕлĕшпе сахал мар тăшманла ĕçсем тунă.

Çак майпах Дмитрийев, Филиппов тата Гаврилов партипе Совет влаçĕн налог политикине пăсса тăшманла ĕçсем тунă.

Вĕсем кăтартса пани тăрăх, йалсоветсенче ĕçлекенсем налога тивĕççĕр нумай хурса, уйрăм хуçалăхсен йулашки йапалисене сутма тытăннă.

Филиппов ПСК(б) Парти райком секретарĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра, налог тÿлеймен йеդиноличниксен лашисене, çурчĕсене хăй кайса илнисем те пулнă

Филиппов райĕçтăвкомпа райкомĕнси çинче хăйне валդи „фермă“ организациленĕ. Райĕçтăвком тыррипе ĕрчетнĕ выդăхсене сутса спекуդаци тунă. 1935—36 çулсенче ПСК(б)П Обкомĕнче ĕçлекенсене валդи хур пуçтарса панă. ПСК(б)П Обкомĕнчен пыракансене (Петрова, Андрейева, Йурйева, Кузнецова тата ыттисене те) хăй хватерĕнче ĕçтерсе-çитерсе йăпатса кăларса йанă.

Филиппов райком аппаратне тăшманла елементсене, спекуդантсене илнĕ.

Филиппов ПСК(б)П райкомĕн тата хăйĕн çитменлĕхĕсене кăтартса критиклекен коммуниссене кабинета чĕнсе пĕçертнĕ, вĕсене хăратса „епĕ çапла Филиппов çинчен каламан“ тесе распискăсем илнĕ.

Уйрăм колхозсенчен йÿн хакпа йĕ укçасăрах тыră пуçтарни те сахал мар пулнă. Аслă Йелчĕкри Ленин йачĕпе тăракан колхозран Филиппова укçасăрах выդăхсем, пылсем, тырăсем парса тăнă. Çавăншăн вăл Васийлев текен тăшманла етеме парти ретне кайала илме пулăшнă.

Çакăн пекех райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçленĕ Дмитрийев та, Филипповпа пĕр канашлă пулса, сахал мар сăтăрлă ĕçсем тунă.

Филипповпа Дмитрийев тăшманла ĕçсем тунисем çинчен партин пуçламĕш организацийĕсен пухăвĕсенче те, Йелчĕк районĕнчи коммуниссен пухăвĕсенче те сахал мар калаçнă. Çапла пулин те, ПСК(б)П райкомĕ тата Йелчĕк районĕнче тухса тăракан „Колхоз йалавĕ“ хаçат Филипповпа Дмитрийевăн тăшманла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе парти организацине мобилизацилемен.

ПСК(б)П райком çумĕнчи пуçламĕш организацин пухувĕнче Филиппов çинчен сăмах хускатсан, райком членĕсем (Осипов, Макаров) калаçакансене хĕсес политикă тытрĕç. „Колхоз йалавĕ“ хаçат редакторĕ Осипов, Филиппов çунатти айĕнче витĕнсе пурăннăскер, „есĕ, Осипов йулташ, мĕншĕн Шупашкартисем çинчен анчах калаçатăн, районри çитменлĕхсем çинчен, пуринчен те ытла Филипповăн тăшманла ĕçĕсем çинчен „каламастăн тесен“, çапла ответ парат: „Не Ваше дело, о Филиппове говорить мое дело, не заставляйте мевя“ терĕ те пăрăнса карĕ.

Декабĕрĕн 31-мĕшĕнче Йелчĕк районĕнчи коммуниссен аслă пухувĕ пулса иртрĕ. Вăл пухура парти райком секретарĕ Сахалкин йалхуçалăх ĕçĕсен 1937 çулти итогĕсемпе 1938 çулти ĕçĕн задачисем çинчен доклад туса пачĕ. Анчах та хăйĕн докладĕнче Филипповпа Дмитрийевăн сăтăрла ĕçĕсем çинчен çимĕн те каламарĕ.

Пуху Дмитрийева парти ретĕнчен кăларас тесе ыйту лартрĕ, анчах „Колхоз йалавĕ“ хаçат редакторĕ Осипов: „Епĕр Дмитрийева ку пухура парти ретĕнчен кăларсан, демократине пăсатпăр“ тесе Дмитрийев майлă йурларĕ.

Райком секретарĕнчен, Сахалкин йулташран: Дмитрийев çинчен пĕлнĕ пулин те, мĕншĕн халиччченех пуçламĕш организацире тата райкомра ыйту лартса сÿтсе-йавман тесе ыйтсан: „Дмитрийев пысăк çын“ тесе ответлет.

Сахалкинпа Осипов районри коммуниссен аслă пухуне пăхăнтараймарĕç, коммуниссен аслă пухувĕ Дмитрийева парти ретĕнчен кăларчĕ.

Çавăн пекех, Филипповăн сăтăрлă ĕçĕсем те Йелчĕк райкомĕн членĕсемшĕн паллă пулнă. Анчах та Сахалкин, Осипов, Макаров, Мартыновсем Филиппова хăйсен „çулпуçĕ“ вырăнне шутласа, пĕтĕм конференцине улталаса Филиппова парти Обком членне суйлама пулăшнă.

Çакăн пек тăшманла ĕçлекенсене хÿтĕлекенсене ответ тыттармасăр хăварма мар.

А. Воробйов.

## Заդатисем пысăк хаваслăхпа иртеççĕ

Йуманайри „Болդшевик“ колхоз çумĕнчи (Йетĕрне р.) пуçламĕш комсомол организацийĕ комсомолецсене политикăла воспитани парас ĕçе йĕркелерĕ. Политшкулра вĕренекенсен шучĕ кунран кунах ÿссе пырат. 1937 çулхи октабер уйăхĕнче, политшкул уçăлсанах 4 комсомолец çеç пулнă пулсан, 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне 8 комсомолец, 3 колхоз çамрăкĕ заդатине пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ. Декабĕрĕн 15-мĕшчен кашни заդатинчех „ССРС Аслă Советне суйламалли Положенине“ тĕплĕн вĕреннĕ. Халĕ ĕнтĕ епĕр политшкула мĕн пур колхоз çамрăкĕсемпе хĕрсене йавăçтарас тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Пропагандист Ижейев йулташ кашни заդатинех лайăх хатĕрленсе пырат. Конспектсем çыратпăр. 1938 çулхи йанварĕн 3-мĕшне 12 занати пулса иртнĕ. Кашни заդати пысăк хаваслăхпа иртет.

П. Платонов.

## Вăрманпромхоз директорĕсемпе райĕçтăвком председателĕсен канашлăвĕ

Вăрман хатĕрлекен организацисем хăйсен 1937 çулхи задачисене пурнăçа кĕртсе çитермен. 1937 çулхи тăваттăмĕш квартăлти плана, çавнашкалах çулталăкри плана Шупашкар вăрманпромхозĕсĕр пуçне, нихăш вăрманпромхоз та тултарман. Йĕпреç вăрманпромхозе (директорĕ Солдатов) хатĕрлессипе 24,1 процент, турттарассипе 27,4 процент, Шăмăршă вăрманпромхозĕ хатĕрлессипе 45,1 процент, турттарассипе 56 процент çеç тултарнă.

Хăйсен планне тултарнă механизациленĕ çулсем пачах çук. Тăваттăмĕш квартăлти плана Кăмăшари çул 40 процент. Сăр çинчи 57,9 процент, пĕтĕмпе механизациленĕ çулсем тăваттăмĕш квартăл планне 47,8 проц., çулталăк планне 78,2 проц. кăна тултарнă.

Вăрманпромхозсем тата механизациленĕ çулсем вăрман хатĕрлев планне мĕншĕн тултарманни вăрманпромхоз директорĕсемпе райĕçтăвком председателĕсен йанварĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ канашлувĕнче лайăхах палăрчĕ. Вăрманпромхозсенчи работниксем нумайăшĕ ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановленипе халĕ те тĕплĕн йăлана илмен. Вĕсем вăрманта ĕçленĕшĕн колхозсенче ĕçкунĕ парассине пĕтерсе, укçа тÿлеме туппи пахалăхне вĕçне çитиех йăлана çăн та пулман. Ку постановленийе колхозниксем хушшинче йăлантар а паман. Халĕ вара хăрушлăх хĕстерсе çитерсен „колхозниксем ĕçлеме пымаççĕ“ тенипе хăйсем начар ĕçленипе витме пикенеççĕ. Çавнашкал тÿрĕ Йĕпреç вăрманпромхоз директорĕ Солдатов.

Солдатов хăй йĕртсе пыракан вăрманпромхоз плана тултарманнин сăлтавĕсене тупса парас майпа районсем çеç вăйĕ паманни çинчен нумай калаçат. Анчах вăрманпромхоз колхозсемпе договорсем чылай çĕрте йатшăн çеç тупи çинчен аса илмест. Вăл Леспроторг начар ĕçлени çинчен калат. Анчах хăйĕн аппаратĕнче тăшманла елементсем ĕçлени, стахановла йухăма пусарса ларт-ни, 300 пин тенкĕ убытка пани çинчен шарламаст. Солдатов йĕртсе пыракан вăрманпромхозра критикăна йалапах пусарса пынă. Ĕçкĕ-çикĕ йăли саралса пынă.

Шăмăршă вăрманпромхозĕнче те ĕçсем нумайах лайăх мар. Вăрманпромхоз директорĕ Матвейев рабочисен массисемпе çыхăнса ĕçлемест. Хăйĕн ĕçне пуринчен ытла кантурта ларса иртерет. Стахановла йухăма пуçарман. Хуçалăх ĕçне вĕренсе çитессишĕн тăрăшмаст. Руководительсем çапла ĕçленине кура ытти работниксем те ÿрĕк-сÿрĕк ĕçлеççĕ.

Пур вăрманпромхозсенче те стахановла йухăма çĕклес пирки пачах ĕçлемеççĕ. Çавăнпа стахановла йухăм ÿсес вырăнне, чакса пыни курăнат. 1937 çулхи апрелĕн 1-мĕшне пĕтĕм рабочисен хисепĕнчен стахановецсем 24,1 проц. пулнă пулсан, 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне 5,5 процент çеç йулнă. Кун хыççăн стахановла йухăма вăйлатассишĕн ĕçлемени уççăнах курăнса тăрат. Çавна пула 1937 çулхи ĕçтухăçлăхне ÿстерес плана 90 процент çеç тултарнă. Вăрманта лайăх ĕçлекен колхозсем те, бригадăсем те пур. Анчах вĕсен опытне сармаççĕ.

Вăрман хатĕрлев планне тултарманнишĕн вăрманпромхоз директорĕсемпе пĕртанах райĕçтăвкомсем те айăплă. Ку тарана ситсе нихăш район та çеç вăйĕ парас плана тултарман. Уйрăмăнах Патăрйел, Йелчĕк, Шăмăршă районĕсем начар ĕçлеççĕ. Вăл районсенчен ĕçлеме пыракансем вуншарăн çеç шутлаççĕ.

Вăрманта сутă-илÿ, култмассăлă ĕçе вăйлатас тата ĕçлекенсем валդи условисем туса парассишĕн кĕрешес тĕлĕшпе те начар ĕçленĕ. Профсойуз организацисем халĕ те хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнман-ха. Районри организацисем те вăрманти ĕçпе интересленмеççĕ.

Чăвашвăрманпром руководстви сăтăрçăсен йулашкисене пĕтерессишĕн кĕрешĕве тивĕçлĕн пуçарман. Ĕçре ÿснĕ кадрсене çÿлĕ вырăна лартасси питех йĕркеленмен пырат.

Чăвашвăрманпромăн вăрман хатĕрлев планне тултармалли пур кирлĕ условисем те пур. Тăрăшса, çине тăрса, тимлĕн ĕçлени кирлĕ. Стахановла йухăма анлăн вăйлатса пымала.

## Вăрманта ĕçлемеççĕ

Актайри „Комбайн“ колхозăн (Елĕк р.) 700 кубла метр вăрман касса хатĕрлемеле. Колхоз председателĕ Йе. Филиппов вăрман хатĕрлес ĕç çине сÿреккĕн пăхнă пирки, пайан кун та колхозниксене вăрман ĕçлеме йамаст.

С. Йаковлев.

## Вăрман хатĕрлессишĕн вăйа хурса ĕçлени курăнмаст

Шăмăршă вăрманпромхозĕ плана тултарассипе çителĕксĕр ĕçлени, районти организацисемпе учреждениесем ку ĕç çине иккĕленсе пăхнинчен килет. Уйрăмăнах кунта райĕçтăвком сахал пулăшу кăтартат. Вăл кăçал вăрман ĕçлеме катари йалсене çирĕплетнĕ. Иртнĕ çулсенче вăрманпромхозра активлăн ĕçленĕ „Мотор“, „Труженник“, „Новая деревня“, „Пламя труда“, т. ытти колхозсене те урăх çĕре—райтопа (райлесзагот) ĕçлеме куçарчĕç.

Пайанхи куна вăрманта çурăй çынсемпе лаша вăйе те çителĕксĕр ĕçлет. Хăшпĕр колхоз председателĕсем „ĕлкĕрĕпĕр-ха“ тесе лараççĕ.

Районта тухса тăракан „Колхозник сасси“ хаçат та вăрман хатĕрлевĕпе сахал çутатса пырат. Йулашки 2—3 уйăх хушшинче вăрман ĕçĕпе пĕтĕмпе те 2—3 заметкăран ытла çырман.

И. М в.

## Оборонă ĕçне вăйлатассишĕн

Çĕмĕрле („Чăваш Коммунĕ“ корр.) „Болդшевик“ заводри осоавиахим организацийĕ çак йулашки уйăхсенче ĕçе вăрахлатрĕ. Член укçи пухассипе те кайа йулса пырат. Оборонă ĕçне вĕренес тĕлĕшпе организациленĕ кружоксем ĕçлемеççĕ. Хăш-пĕр кружоксен руководителĕсем те çук. Пуçламĕш оргнизацисем пачах ĕçлеме манса кайнă

— Вăрçă вăхăтĕнче хĕрарăм та пысăк вăй пулса тăрат. Пирĕн хĕрарăмсен çавна манмала мар. Оборонă ĕçне вĕренесси, тăшмана кирек-хăш вăхăтра та çирĕп отпор пама хатĕр тăрасси, вăл—пирĕншĕн кашниншĕнех тĕп задачă пулса тăмала. Епĕ кăçал 11 килхуçи хĕрарăмĕсене ПВХО кружокĕнчен вĕрентсе кăлартăм. Вĕсем халĕ тата та вĕренесшĕн, анчах кружоксем ĕçлемеççĕ, —тет килхуçи арăмĕ Иваницкайа йулташ.

— Епĕ, 1914-мĕш çулта пуçланнă империалисăм вăрçинче пулса, вăрçă мĕн иккенне лайăхах ăнлантăм,—тет Николайĕв йулташ.

— Оборона ĕçне вĕренесси, кашни çыншăн чи пархатарлă ĕç пулса тăрат. Епĕр вăрçасшăн мар, анчах хамăр çине тапăнакансене хирĕç тăрса, тăван çĕршыва сыхлама хатĕр. Çавăнпа пирĕн, заводра ĕçленĕ вăхăтрах, вăрçă ĕçне те вĕренмеле,—тет Николайĕв тулташ.

Заводри рабочисен çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕ оборонă çинчен доклад итлесе, пĕр сасăпах заводра ĕçлекенсене 100 процентчĕпех осоавиахим членне йавăçтарма, оборона ĕçне вĕренме „ПВХО“, „ВС“ тата ытти кружоксем организацилесе вĕрентме осоавиахим организацине хушса хăварчĕ. Çавăн пекех пуху, 1938 мĕш çулта пăшал пемелли тир тума, допризывниксене пурне те оборонă ĕçне вĕренмели кружоксем урлă вĕрентсе кăлармалла тата хĕрарăмсем хушшинче тăтăшах оборона ĕçне туса пыма пулчĕ. 1938 çулта Çĕмĕрлере парашÿт вышки тума осоавиахим райсовечĕ умне ыйту лартма йышăнчĕ.

Хар. Лисин.

## Тăшмансен йулашкисене пĕтерес çул çинче

ЙĔПРЕÇ. Çак кунсенче коммуниссен районри пухувĕ пулса иртрĕ. Пуху 1937 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сÿтсе-йаврĕ.

1937 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен доклад итленĕ хыççăн, прениере 10 çын тухса каларĕç. Тухса калакансем пурте 1937 çулта колхозсем вăйлă тырпул туса илнине палăртрĕç. Çавăнпа пĕрлех 1938 çулта сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн пĕррĕмĕш çулĕнче татах та вăйлă тырпул туса илес майпа паха сĕнÿсем парса хăварчĕç.

Çакăнпа пĕрлех Йĕпреç районĕ 1937 çулти йалхуçалăх ĕçĕсене мĕнле туса пынипе тишкерсе тухрĕç.

Авăн çапас ĕçе чылай колхозсенче суррине те пурнăçламан. „Победа“ колхозĕнче суртырриссене декабĕрĕн 31-мĕшĕнче çеç çапма пуçăннă. Ку колхозра тырпулсене çапас ĕç вăраха чăсăлни МТС тракторĕсем, молотилкисем йĕркелĕ ĕçлеменнинчен килнĕ. Осипов машинис молотилкăпа ниепле те йĕркелĕ ĕçлеттерме пултараймăн. Çавна пула „Победа“ колхоз правленийĕ машинисене Вăрнар МТС-чен илсе килнĕ.

Йĕпрери Сталин йачĕпе тăракан колхозра авăн çапас ĕçе вăрăма чăсса йачĕç. Суллахи вăхăтра авăн çапма „вăхăт“ тупăйман. Пелисейев, Исташкин бригадирсем колхозниксене авăн çапма мобилизацилес, вырăнне, ĕçсе сÿрене. Колхоз председателĕ Мартынов правленинче икĕ алла сулса ларнă. Çапла вара сур хĕл çите пуçласан тин çавăрăнкалама тытăннă. Халĕ тырпулсене хăвартрах çапса пĕтерес тесе тара тытса ĕçлеттерме пуçланă, кашни çынне кунне 10 килограм тырăла ĕçлетереççĕ. Çапла вара йалхуçалăх ертел уставне уççăнах пăснă.

Сак тĕслĕхсем. „Победа“ тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсем авăн çапассине кайа йулса пыни райĕçтăвком пайĕпе МТС-че ĕçлекенсене паллă пулнă. Анчах вĕсем çав колхозсем çине çавăрăнса та пăхман.

Авăн çапас ĕç кайа йулнине пула тупăшсене валеçес ĕç те кайа йулчĕ. Пайанхи куна 19 колхозра çеç тупăшсене валеçме тытăннă.

Суракине хатĕрленесси вырăнтан та хускалман. Райçĕрĕç пайĕ сураки планĕсене колхозсене халĕ те ситермен. Çавна пула „Победа“. „Сĕнĕ пурнăç“, Литвинов, Чапайев йачĕпе тăракан колхозсенче суракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Йĕпреç районĕ йалхуçалăх ĕçĕсемпе кайа йулнишĕн, 1938 çулхи суракине хатĕрленессипе нимĕн те туманнишĕн райĕçтăвкомпа (Захаров), парти райкомĕ (Григорйев) айăплă. Вĕсем йалсоветсемпе колхозсене оперативлă йĕртсе пыман, кабинетра ларнипех ĕç пулассa шанса пурăннă.

Иккĕмĕш ыйту—организацилле ыйтусем пулчĕ. Ку ыйтупа ПСК(б)П райком вицĕмĕш секретарĕ Андрейев йултăш ПСК(б)П Обкомĕ Йĕпреç райкомĕн пĕррĕмĕш секретарне Григорйева, райĕçтăвком председателне Захарова ĕçрен кăларни çинчен пĕлтерчĕ.

Григорйевпа Захарова мĕншĕн ĕçрен кăларнă? Кун пирки Андрейев йултăш тĕплĕн каласа пачĕ.

1936 çулта районра йалхуçалăх налогĕ шутласа хурас кампанине иртерес ĕçре саккунран иртсе кайнă. Çак тăшманла ĕçе районри финанс пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ халăх тăшманĕ Туринге пуçарса пынă. Йалсоветсенче налог тÿлеймен хуçалăхсен пурлăхĕсене торгипе масăллăн сутма тытăннă. Хурамал йалсовет председателĕ, парти членĕ пулнăскер, Филиппов налог тÿлеймен хуçалăхсен пурлăхĕсене опис туса, илсе тухса торгине йÿнĕ хакпа сутнă. Хĕрарăм тумтирĕсене, минтерçытарсене т. ыт. йапаласене çĕр вăрринче пырса илсе тухнă. Сыварнă вăхăтра автомашинăпа пырса тумтирсене туртарнă. Кайран вара тумтирсене йÿнĕ хакпа сутса пĕтернĕ.

Çавăн пекех Унакасси йалсоветĕнче те (председателĕ—коммунис Новиков) йединоличниксен тупăшĕсене ÿстерсе, вĕсем çине пысăк налогсем хунă. Çакăн хыççăн йалсоветĕнчи 98 хуçалăхран 47 хуçалăхне торгипе пурлăхĕсене сутса пĕтернĕ. Кунсăр пуçне чылай йединоличник хуçалăхĕсем çине штрафсем хурса тухнă.

Çак халăх тăшманĕ ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ Григорйев, райĕçтăвком председателĕ Захаров лайăх пĕлсе тăнă. Налог тĕрĕс хуманни çинчен районри финанс пайне кашни кун çĕршер жалăбă пырса кĕнине те лайăх пĕлсе тăнă вĕсем. Захаров налог комиссийĕ председателĕ пулнă. Анчах, Захаров налог хурас ĕçре тунă йăнăшĕсене вăхăтра йусас тесе, шухăшламан. Йалсовет председателĕсен канашлăвĕсенче тата телефон тăрăх та Захаровпа Григорйев налог укçине начар пухатăр тесе сĕтел çине çапса вăрçнă, пурлăхсене торгипе сутма хушнă.

ПСК(б)П Обкомĕнчен тата Парти Контроդ комиссийĕнчен килсе тĕрĕсленĕ хыççăн, районра налог шутласа хурас ĕçре саккуна хытă пăснине палăртса, ăна вăхăтра тÿрлетме çирĕп кăтартусем парса хăварнă пулнă. Анла пулсан та, Захаровпа Григорйев налог шутласа хурас ĕçре тунă йăнăша тÿрлетме шутламан.

1937 çулта апрел—июнь уйăхĕсенче ПСК(б)П Обкомĕпе Парти Контроդ комиссийĕ налог шутласа хурас саккуна пăснăшăн Захаровпа Григорйева парти йĕнчен ответ тыттарса, Унакасси йалсовет председателне Новикова тата районти финанс пайĕн пуçлăхне ответ тыттарассипе тивĕçлĕ мĕрă йышăнасси çинчен решени йышăннă пулсан та, Захаровпа Григорйев вăл решенине пурнăçламан, ĕçе йурийех чăсса пынă.

Григорйевпа Захаровăн тăшманла ĕçĕсем татах та сахал мар пулнă. Вĕсем троцкисла-бухаринла бандă йулашкисемпе, буржуалă националиссемпе кĕрешсе пырас вырăнне, вĕсене районра вăй илме ирĕк парса пынă. Акă, райсутĕç пайĕн пуçлăхĕ пулнă Захаров М. троцкис нумай вăхăт хушши районти сутĕç пайĕнче сăтăрлă ĕçсем туса пурăннă. Вăл шкулсен ĕçне пурийех хавшатса пынă. Анла пулсан та Захаров М. райком бÿро членĕнче тăнă. Григорйев ăна часчасах райкомра ĕçсем парса „ĕçлеттернĕ“, парти документĕсене улăштарнă вăхăтра, парти документĕсене çырма хушнă т. ыт. те.

Çавăн пекех райçĕрĕç пайĕнче Илйин троцкист райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. „Заготзерно“ пунктĕнче халăх тăшманĕсем—Колбасов, Жибалов т. ыт. йăва çавăрса, нумай вăхăт хушши сăтăрла ĕçсем туса пурăннă.

Райĕçтăвкомра халăх тăшманĕ Грошев техник пулса ĕçленĕ. Вăл районра чылай вăхăт хушши сăтăрла ĕçсем туса пурăннă. Грошев „техник“ Йĕпрери вăтам шкул суртне сăтăрла тутарнă. Григорйевпа Захаров çакăн çинчен лайăх пĕлнĕ. Анчах, нимĕн те туман. Пулăшкинчен, Грошев „техник“ вредителле троцкисла ĕçĕсене пĕтĕм халăх пĕлсен тин, Грошев „техникăн“ сăтăрла ĕçĕсене „шыраса тупма“ комисси организациленĕ. Ку комиссире райсутĕç пайĕн пуçлăхĕ пулнă Захаров, райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Грошевăн сывăх тусĕ Семенов тăнă. Вĕсем Грошевăн сăтăрла ĕçне уçса палăртман, шăлса лартнă. Çакăн хыççăн райĕçтăвком председателĕ Захаров Грошева районран тухса тарма май туса панă. Грошев „техника“ районран тухса тарма НКВД начаդникĕ пулнă Лебедев та хытă пулăшнă.

Йухра Захаровпа Григорйев хăйсен тăшманла ĕçĕсене пĕтĕмпех сÿлти органсем çине, ПСК(б)П Обкомĕн кивĕ составĕ çине йăвантарма пăхрĕç. Анчах вĕсен ĕç тухмарĕ. Прениre тухса калаçакан коммуниссем (пурĕ 18 çын тухса калаçнă) пурте Захаровпа Григорйевăн тăшманла ĕçĕсене тăрă шыв çине туртса кăларчĕç.

Тухса калаçакансем Григорйев кадр хатĕрлес, парти вĕренÿпе вăйлатса пырас ĕçсене йурийех йăпăхтарса йанине палăртрĕç.

Захаров та çавнашкалах ĕçлесе пынă. Вăл йалсовет председателĕсене тивĕçлипе йĕртсе пыман, ĕçре пулăшу парас вырăнне, бÿрократла, чиновникла йĕртсе пынă, йалсовет председателĕсене йалах вăрçнă.

Тухса калаçакансем районри ытти ответлă работниксен йурăхсăр ĕçĕсене уçса палăртрĕç.

Милиндейев прокурор районра революцилле саккунлăха пăсакансемпе кĕрешес вырăнне вĕсене хÿтĕлесе пынă. Налог укçи тÿлеменнишĕн йединоличник хуçалăхĕсен пурлăхĕсене масăллăн торги туса сутас ĕçе Милиндейев прокурор хăй те хутшăннă. Вăл Туса йалсоветĕнче торгире чăхсем т. ыт. йапаласем йÿнĕ хакпа илнĕ. Халăх тăшманĕсемпе кĕрешмен, ĕççыннисен жалăбисем çине бÿрократла пăхнă. Чурачăкра, Чăрăшкассинче тата „Костор“ колхозĕнче халăх тăшманĕсем йăва çаварса илнĕ. Çакăн çинчен Милиндейев йатĕнче жалăба пулнă пулсан та, вăл нимĕн те туман.

Çаксене шута илсе коммуниссен районри пухувĕ Григорйева парти райком секретарĕнчен, Захарова райĕçтăвком председателĕнчен кăларса суда пама, райкомăн иккĕмĕш секретарне Боровкова ĕçрен кăларса, вăл маланне парти ретĕнче тăма пултарни çинчен райком бÿровĕнче сÿтсе-йавма хушса йышăнса хăварчĕ. Çавăн пекех прокурор Милиндейев, Унакасси йалсовет председателĕ пулнă Новиков малашне парти ретĕнче тăма тивĕçлĕ маррине шута илсе, вĕсем çинчен райком бÿровĕнче сÿтсе-йавма хушса хăварнă.

Дм. Михайлов.
Ф. Захаров.

## Икшер нормă тултарчĕç

Канашри вагонсем йусакан заводри ремонтнăй цехра ĕçлекен стахановецсем 1938 çула ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕç. Ĕлĕкрех нормăна тултарса ĕçлекенсем декабĕр уйăхĕнче икшер нормă ытла тултарчĕç. Акă строгаդщик Петров декабĕр уйăх планне 225 проц., долбежник Иуматов—222 проц., Гибранов 201 проц. тултарчĕç т. ыт. те. Çавăнпа пĕрлех вĕсен ĕçукçийĕсем те ÿсрĕç. Декабĕр уйăхĕнче Гибранов—390 тен., Петров—326 тен., Тренев—331 тен. ĕçлесе илчĕç.

Цехри стахановецсем кăçалхи çул тата та лайăхрах ĕçлеме, аварисене çийĕнчех йусаса пыма, ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилеме пулаççĕ. Социалисăмла ăмăртува електроцеха чĕнчĕç.

Николайев

## Дружинă организацилерĕç

Есмĕлти „Ударник“ колхозра пушар дружини организацилерĕç. Дружинăра пурĕ 7 çын. Дружина начаդникĕ—Романов Михаил.

Дружинă çумне икĕ лаша çирĕплетсе панă, вăл лашасемпе урăх ĕçре усă курмаççĕ. Насоссене, çунасене т. ыт. пушар инвентарĕсене йусаса хатĕрленĕ.

В. Шлихер.

пĕр-пĕр паллă клас пулăшса тăнипе çеç çуралма пултарат“.

Ленинăн çак кăтартăвне пурнăçа йĕркелĕн кĕртсе пынă. Колхозсене аталантарса пыма, вăйлă индустри, социалисăмăн чечекленекен економики тума совет государстви нумай укçа тенкĕ хывнă. Халăх хуçалăхне укça-тенкĕ хывни питех те пысăк хисепсемпе шутланат: 1924—28 çулсенче халăх хуçалăхне 11,1 мĕлйард тенкĕ, 1929—32 çулсенче—52,1 мелйард тенкĕ, ытти тăватă çул хушшинче—1933—1936 çулсенче—117,1 мелйард тенкĕ хывнă.

Ленинпа Сталин вак хуçалăхлă хресчене производствăна социалисăмла организацилени çеç, машинлă техникă çеç улăштарма пултараççĕ, тесе кăтартса панисене парти пурнăçа йĕркелĕ кĕртсе пычĕ. Пирĕн чечекленсе пыракан социалисăмла индустри колхозри хресченсене чи чаплă паха машинсем парса тăрат. Йалхуçалăх ĕçĕ индустри ĕçĕн тепĕр йенĕ пулса тăрат. Хресчене 100 пин трактор парсан, вăл: „Епĕ коммунишĕн“, тесе калĕ, тенĕ Ленин. Халĕ йалхуçалăхĕнче 450 пин трактор, 120 пин комбайн, 120 пин грузовой автомобил пур. Совет влаçĕ хресченсене йалхуçалăхăн ĕлĕкхи вăхăтри ĕçхатĕрсемпе катăргăри пек ĕçлессинчен ĕмĕрлĕхе хăтарчĕ.

Капиталисăмла государствăсенче машинă вак хресчен хуçалăхсене аркатат, чухăнлатат, пĕтерет. ССР Сойузĕнче пачах урăхла. Социалисăмла çĕршывра пысăк машинă колхозника пуйан та културăлă пурнăçăн çÿлĕ пусăмне улăхмалли вăйлă май пулса тăчĕ.

Социалисăмла системăна пула йалхуçалăхăн производствăлă вăйĕсем хытă ÿсеççĕ. Колхоз хуçалăхĕпе совхозсен хуçалăхĕпе пĕрле, унăн пур пайĕсене те шута илсен, вăрçăченхи йалхуçалăхĕнчен икĕ хут ытларах продукци парат. 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен Сталин йулташ панă лозунга пурнăçа ăнăçлăн кĕртсе пыратпăр. Кăçалхи çулах 7 мĕлйард пăта йахăн тыră туса илнĕ.

Колхоз стройне пула йалта çуклăхпа чухăнлăха пĕтернĕ. Революцичен хресчен хуçалăхĕсем хушшинче чухăнсем 65 процент, вăтамсем 20 процент, кулаксем 15 процент пулнă. Пĕтĕм хресчен хуçалăхĕсем шутĕнче лашасăррисем—30 процент, ĕçхатĕрсĕррисем—34 процент, тыră акманнисем—15 процент пулнă. Çакăн пек ĕнтĕ ĕлĕкхи йалăн хăрушла чухăнлăхпа çуклăхăн хурлăхла картинĕ.

Социалисăмла Аслă Октабĕр революцийĕ хыççăн кулака хĕстерсе лартнă, чухăнсен хисепĕ чылайăх чакрĕ, йал вăтамланчĕ. 1928—1929 çулсенче чухăнсем—35 проц., вăтамсем—66 проц., кулаксем 4—5 проц. пулнă.

Пирĕн çĕршывра колхоз стройĕ çĕнтерни пурнăçа йалтах урăхлатрĕ. Халĕ пирĕн кулаксем çук. Колхозри хресченсем йалта чухăнлăха ĕмĕрлĕхе пĕтерчĕç, лашасăр, ĕçхатĕрĕсемсĕр, çĕрсĕр хуçалăхсем çук. Унсăрăн хулара та, йалта та ĕçсĕрлĕхе пĕтерейменни пулнă пулĕччĕ.

Революциченхи йалсенче пулнă 40 мĕлйун выçă чухăнсем колхозсене кĕрсе, пурлăхлă çынсем, ăнăçлăн пуйан пурнăç тăвакансем пулса тăчĕç.

Çаксене пурне те пирĕн çĕршывра капиталиссемпе помешчиксен влаçне кайала илсе килме тăрăшакан тăшмансемпе—троцкисла-бухаринла ирсĕрсемпе çине тăрса кĕрешсе пынипе тунă. Троцкисла-бухаринла шпионсемпе сăтăрçăсем пирĕн çĕршыва фашиссен колонийĕ туса хума шут тытнă пулнă. Халăх тăшманĕсен ирсĕр ĕмĕчĕсене пĕтĕмĕшпех тăрă шыв çине кăларнă. Совет государствин карателдлнăй органĕсем, совет халăхĕ пулăшса пынипе, тăшмансене пĕрне хăвармиччен пурне те тупса пĕтерсе пырĕç.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлани халăх мораդне политикă тĕлĕшĕнчен çирĕп пĕрлĕхлине кăтартрĕ. Çак пĕрлĕхĕн йалавĕ—революцин аслă генийĕ, ĕççыннисен ашшĕ, учителĕ, тусĕ Сталин йулташ. Вĕçĕмсĕр йуратнă Сталин йулташ йачĕпе ССР Сойузĕн халăхĕсем халդхи телейлĕхшĕн, чаплă илемлĕ пуласлăхшĕн хăйсен паттăр кĕрешĕвĕсене çыхăнтараççĕ.

Социалисăмăн никам çĕнейми çирĕп çуртйĕрне чĕтрентерме пултаракан нийепле вăй та тĕнчере çук. Çĕнĕ совет хресченĕсем колхоз стройне хăйсен куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ.

Тăшманла етемсем, троцкисла-бухаринла бандăн шпионĕсем тата диверсантсем хăшпĕр çĕрте колхоз строителствинче сăтăрла ĕçсем тума пăхаççĕ-ха. Тăшмансене, вĕсен сăтăрла ирсĕр ĕçĕсене хăйаррăн пĕтерсе пымала. Пирĕн çĕршывăн Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕрлешнĕ ĕççыннисем социалисăмăн çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿвĕсем патнеле, коммунисăмăн йăлтăртатса тăракан çÿллĕхĕсем патнеле утса, сталинла виççĕмĕш пйатилеткăна пурнăça кĕртессишĕн кĕрешĕве мухтавлăн тытăнчĕç.

# Чăваш орфографинче улшăнусем тумалах

**(Орфографи ыйтăвĕсене сӳтсе-йавнă майпа)**

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн 295-мĕш №-инче Н. Резйуков йулташăн „Чăваш орфографинче пулма кирлĕ улшăнусем çинчен" йатлă статйа пичетленсе тухрĕ. Редакци çак статйана орфографи ыйтăвĕсене сарлака массăсем хушшинче сӳтсе-йавас шутпа пичетленĕ. Епĕр, Куйбышев облаçĕнчи Чаллăнуç районĕнче тухса тăракан чăвашла „Ленин çулĕпе" хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсем, вăл статйана ушкăнпа вуласа сӳтсе-йаврăмăр. Чăваш орфографи правилисенче чылай улшăнусем тумалах тесе вывăда турăмăр епĕр. Анчах, çакăн пек шухăшпа хаљ тин çеç мар йарса илнĕ. Анчах, шухăшпа çеç те мар, чылай хаçат-журналсем йулашки вăхăтра хăйсем тĕллĕнех орфографи ĕçĕнче пайтах улшăнусем турĕç, вĕсене часах ытти çĕрте те йышăнса илчĕç. Халĕ чылай хаçатсем: **Кузьмин, Горький, Харьков, трактор, директор, Михайлов, Алексейов, Петровский** пек сăмахсене çаплипех, вырăсла графикăпах çыра пуçларĕç.

Çăпах та, Чăваш орфографийĕн правилисенче чылай улшăнусем тумала. Вĕсене тума пире пурнăç хăйех хушать. Анчах, вăл улшăнусем пирки çирĕп решени туни кирлĕ. Вăл пур çĕрти чăвашсемпĕн те çирĕп саккун пулса тăтăр.

Манăн кунта пăртак Резйуков йулташăн сĕнĕвĕсем пирки чарăнса тăрас килет. Резйуков йулташăн сĕнĕвĕсемпе чылайăшĕсемпе килĕшсе, йышăнма пулать, анчах хăшпĕр сĕнӳсемпе нийепле те килĕшме май килмест. Вăл халиччен саспаллисем çумне Ь, Ю, Я саспаллисемпе пĕрлех тата Щ, Э саспаллисене те кĕртесшĕн. Малтанах Щ пирки. Щ саспаллине йышăнма кирлех мар. Мĕншĕн тесен, чăвашла çырулăхра Ш-па Ч-па пĕрле çырни вырăсла Щ пекех вулана, йанăраса та çавăн пекех йанарать. Шчербаков, площчадка, площчадь, Ищчеряков т. ыт. те. Кун пек сăмахсем питĕ нумайах тĕл пулаççĕ. Сăмах варринче çырмашкăн Ъ паллăна та йышăнма кирлĕ мар. **Объект, субъект** сăмахсене чăвашла **субйект, обйект** тесе те çырма пулать. **Объявление, изъятие, предъявитель** пек сăмахсем пирĕн чĕлхере сук та.

Э саспалли пирки те çаплах. Пирĕн Е саспаллине пикам та **Йе** тесе вуламаст. **Елемент, поет, електричество, епоха** сăмахсене те пикам та **йелемент, пойет, йелектричество, йепоха** тесе вуламаст. Калăпăр, **Йегоров** çырас вырăнне **Егоров** çырсассăн, ăна чăнахах та **Эгоров** тесе вулама пултараççĕ.

Мăн шутпа, **савăт, пăрахут, саккун, сат, сут, пасар, пуљница** тата ытти çавăн пек сăмахсем пирки те татăклăн калаçса татăлмала. Нумай хаçатсем тăхçан, таппах завод, пароход, базар, бољница, арбуз, суд, сад, паравоз тесе çыраççĕ. Ман шутпа çак сăмахсенчен **завод, суд, закон, фабрик, базар** сăмахсене вырăсла формăпах çырмала, ыттисене çаплипех хăвармала.

Резйуков йулташ **Ия, Ие, Ий** сыпăкĕсемпе пĕтекен **Италия, юстиция, организация, постановление, заключение, пролетарий, Ярославский** пек сăмахсене пуçламĕш формăра вырăсла графикăпах çырма сĕнет. Çаксенчен **ий** сыпăксемпе пĕтекен сăмахсемсĕр пуçне ыттисене йышăнма май килмест пек маншăн. Илĕр **ие** сыпăка. **Райĕçтăвком йышăнна постановление** тейес пулать вара. Ку пĕтĕмпех урăхла айлану парать. **Организация**, тени те вырăнлах мар пек.

Ең, ИЗМ, ИСТ суффиксем пирки нимĕнле сăмах та пулма пултараймасть. Вĕсене улăштармасăрах вырăсла пекех çырни питĕ кирлĕ. Анчах **сть** сыпăкпа пĕтекен сăмахсене пуçламĕш формăра çеç улăштармасăр çырмала, ытти падежсенче вара халĕ мĕнле çыратпăр, çавăн пекех пулмала: **власть—властĕн—властпе** тесе мар, **власть—влаçĕн—влаçĕпе** тесе вĕçлемеле.

Пĕр-ик сăмах чăваш сăмахĕсене тĕрĕс çырас пирки. Нумай хаçатсем **ирттерос** сăмаха **иртерес тесе** çыраççĕ. **Иртерес** тени пĕтĕмпех урăх айлану парать. Ăна ирттерес тесе çырмала. Тата епĕр час-часах **организацийĕсем, организацийĕсенчен, организацийĕсене** çырнă чухне сăмах варринчен йе сыпăка сиктерсе, сăмахран, **комсомол организацисене** тесе çыратпăр. Ку та урăх айлану парать. Çаксене малашне асăрхамалах.

Хĕлĕлĕх, техника, куљтура ӳссе пынă май пирĕн чĕлхе те çĕнĕ интернационал сăмахсемпе пуйанланса пырать. Çакă пирĕн орфографи правилисенче чылай улшăнусем тума хушать. Çак ыйтăва пирĕн тĕплĕн сарлакан сӳтсе-йавмала. Пирĕн орфографи правилисем пуриншĕн те вĕрентекенсемшĕн те, вĕренекенсемшĕн те, пичет ĕçĕнче ĕçлекенсемшĕн те, ĕç сыннисен пур сарлака массисемшĕн те вуласа айланма, çырма, калаçура хăнăхма çăмăл, тĕрĕс пулмала. Малашне пирĕн пур çĕрти чăвашла хаçат-журналсене те пĕр орфографи правилисемпе, пĕр пек терминсемпе çырмала тумала. Çавăнпа та чĕлхе тĕлĕшпе тумали ĕçсене пур çĕрти чăвашсене те хутшăнтармала, вĕсенĕн хушăвĕсемпе сĕнĕвĕсене те шута илмеле.

Чаллăнуç р-нĕ, Куйбышев облаçĕ.
**Ал. Жиров.**

# Совет Сойузĕ тăрăх

★ Ташкент чукунçулĕн палла машинисне Национаљнăçсен Совечĕн депутатне— Йемцов йулташа Узбек ССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн постановленипе Узбек ССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителне çирĕплетнĕ. Узбекистанри Наманган районĕнчи „Иджтимçат" колхозăн çĕрмамăк акса тăвакан палла бригадирне, орденоносец Ибрагим Рахматов йулташа Узбек ССР Çĕр-ĕç Халăх Комиссарĕн заместителне çирĕплетнĕ.

★ Кузбасри 150 ытла чи лайăх стахановец-шахтăрсене йулашки уйăхсем хушшинче йертсе пыракан ĕçе лартнă, вĕсене участкăсен начаљникĕсем, начаљник помошникĕсем тата ĕçĕн стахановла меточĕсене вĕрентекен инструкторсем тунă.

★ Кăçал Мускаври Советсен Дворецне тăвас ĕç анлăн саралать. 1938 çул ваљли йышăнна ĕç планĕпе 352 мĕлйун тенкĕ укçа хывмала. Иртнĕ çул 25 мĕлйун тенкĕ расхутланă. Ийунь уйăхĕнче питĕ пысăк мехалл конструкцисене пĕрлештерме пуçлаççĕ. Вăл конструкцисемпе суртăн каркасĕ пулать.

★ Мускаври Хĕрлĕ Çарăн Тĕп театрне туса çитерне, тесе калама йурать. Театрăн калама çук пысăк сценин çӳлĕшĕ 12 хутлă çуртпа танлашать. Сценă тарăнăшĕ —25 метр. Сценă хăйĕн виçипе Совет Сойузĕнче чи пысăкки пулать.

(ТАСС).

## Вăрлăх таса пулмала

ОДЕССА, йанварĕн 3-мĕшĕ. Вăрлăхсене тĕрĕслесе пăхакан лабораторисене тĕрĕслесе пăхма тесе пĕрчĕлĕ куљтурăсен вăрлăх тĕслĕхĕсем илсе пынă. Вăрлăхсене анализ тунине тĕрĕслесе пăхнă 195 пин центнер вăрлăхран 19 пин центнерĕ шăтас пултарулăхне çухатнине кăтартнă. Ку вăл хăшпĕр йертсе пыракан работниксем колхоз хуçалăхĕ çине ниме йурăхсăр пăхнипе пулнă.

Бољше—Врадийевск районĕнчи Крупская йачĕпе тăракан йалхуçалăх ертел правленин председателĕ Йеременко суртлă вăрлăхсене çамăр анакан çурта хывнă. Вăрлăхсем çăмăрпа йĕпенсе пăсăлнă. Йеременко йĕпеннĕ вăрлăха ытти вăрлăхсемпе хутшăнтарса, вĕсене пĕтĕмпех акма йурăхсăр туса хунă.

Вăрлăхсем çине çакăн пек хуçасăрлăхла пăхнă фактсем пĕрре çеç мар. (ТАСС).

## Колхозниксем Шекспирăн „Гамлетне" лартаççĕ

ТĂВАЙ. Тĕнейаленчи драма кружокне колхозри паллă бригадир Иванов Леонтий йертсе пырать. Кружок кăçал Шекспирăн „Гамлет" трагедине пысăк пахалăхпа лартса пачĕ. Драмкружок ĕçне çамрăк колхозниксем кăна мар, ваттисем те активлăн хутшăнаççĕ.

Драмколлектив „Гамлета" кӳршĕри Йантăрча, Тушкил, Уљанкă йалĕсене кайса лартса пачĕ. Кӳршĕ йалçыннисем спектакљсене кăмăллăн йышăнчĕç. Драмкружок çумĕнче тата струнă оркестăр пулать.

И. Николайев.

Грузи халăхĕн XII-мĕш ĕмĕрти аслăран та аслă поэчĕ Шота Руставели çуралнăранпа 750 çул тултарнă тĕле.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Тариељ хатайцăсемпе çапăçни—Сергей Кобуладзе художникĕн иљљустрацийĕ. (Шота Руставелин „Витязь в тигровой шкуре" поэмине Академи кăларакан кĕнекерен).

Сойузфото репродукцийĕ.

# Тĕрĕсленĕ заметкăсем

* Шăхасан районĕнчи Малти Унтавăш йалсоветĕнче ĕçлекенсем, йалсовет председателĕ Н. Иванов, унăн заместителĕ А. Иванов тата Кайри Унтавăш йалĕнчи йалуполномоченнăйĕ Иванов Аким йалавах революцилĕ саккунлăха пăхăнмасăр, ăна пăсса ĕçлеççĕ. Йалуполномоченнăйĕ Иванов Кайри Унтавăш йалĕнчи Йаковлев Григорипе Иванов Денисăнне укçа-тенкĕ вăхăтра тӳлеменшĕн, опис тумасăрах Йаковлевăнне пĕр ĕне, Ивановăнне 8 сурăх çĕр хута илсе тухнă та, ĕçкĕле сутнă. Вĕсен ирсĕр ĕçĕсем çинчен районри пуçлăхсем лайăх пĕлеççĕ пулин те, нимĕн те шарламаççĕ, тесе çырнăччĕ.

Вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, Малти Унтавăш йалсоветĕнче революцилĕ саккунлăха пăсса ĕçлени пулнă, йалсовет председателĕ Иванов Н., Иванов А. çинчен уголовнăй ĕç пуçарнă. Халĕ ĕçе йĕрлеççĕ, тесе пĕлтерчĕ Шăхасан райĕçтăвкомĕ.

* Ийунĕн 23-мĕшĕнче 1936 çулта, ирхине 2 сехетре Тури Татмăш (Елĕк р-нĕ) йалĕнчи Сорокин Иван пирĕн кантăка çĕмĕрчĕ. Çак паллă хулиган çинчен районти тивĕçлĕ органсене пĕлтерни çулталăк ытла иртрĕ ĕнтĕ. Анчах Сорокин çавах йал хушшинче хулиганла ĕçсем туса çӳрет.

Епĕ „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцинчен пулăшу ыйтатăп, тесе çырать Павлова.

Çак заметкăна „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ Елĕк районĕнчи милици уйрăмне тĕрĕслеме йанăччĕ. Ĕçе тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Сорокина йал хушшинче хулиганла ĕçсем туса пурăннăшăн Уголовнăй Кодексăн 74-мĕш статйи тăрăх суда панă, тесе пĕлтерчĕ Елĕк районĕнчи милици уйрăмĕ.

## Оборонă значокĕсене илеççĕ

Çĕрпӳри фељдшĕрсен шкулĕнче оборонă кружокĕ лайăх ĕçлет. Занятисене расписани тăрăх ирттереççĕ. II—III курссенчи студентсем пурте „ПВХО", „ГСО" значокĕсене илнĕ. Йулашки кунсенче Ворошиловла тĕл перекенсен значокне 20 студент, ГТО значокне 30 студент илчĕç. Унсăр пуçне, студентсем пелучилишчăна, йалхуçалăх техникумне тата вăтам шкулсене кайса, ПВХО, ГСО нормисене пама вĕрентеççĕ.

К. Михайлов.

## Ленинла комсомолăн программипе уставне вĕренеççĕ

Шывпуç Чуракассинчи туллимар вăтам шкулта комсомола кĕме çул çитнĕ пионерсем комсомол ретне кӳçма хатĕрленеççĕ. Халĕ ленинла комсомолăн программипе уставне вĕренеççĕ.

Уставпа программăна отрйад вожатăйĕ П. Василйев вĕрентет.

Шăхасан р. А. Никитин.

# Кайа йулса пыраççĕ

Йĕпреçсем кăçал йалхуçалăх ĕçĕсене вĕçлессипе чăтма çук кайа йулчĕç. Пайанхи куна тырпулсене çапса пĕтермен колхозсем сахал мар. Тырпулсене çапассипе „Победа", „10 лет Октября", „Красный водник", Сталин тата Литвинов йачĕпе тăракан колхозсем чăтма çук кайа йулчĕç. „Победа" колхозра çуртрисене декаберĕн 30-мĕшĕнче тин çапма тытăннă. Ку колхозра тырпулсене çапас ĕç кайа йулни вăл—МТС тракторĕсем, молотилкисем начар ĕçленинчен килнĕ.

Колхозсен тупăшĕсене валеçес ĕç те кайа йулчĕ. Пайанхи куна райçĕрĕç пайĕ 19 колхозăнне çеç тупăшсене валеçмели ведăмăççене пăхса тухса çирĕплетнĕ.

## Гостингсри шахмăт турнирĕ

ЛОНДОН, йанварĕн 4-мĕш. Рейтер агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Гастингсри шахмăт турнирĕн улттăмĕш турĕ çапла иртнĕ: Александерпа Ржежевский, А. Томаспа Ферхерст тата Флорпа Керес выљăнă партисем никам çĕнтерейменнипе пĕтнĕ. Файн Микенасран выљаса илнĕ. Джордж Томаспа Тейлор выљакан партине тепĕр вăхăта хăварнă. Тейлорпа Флор выљакан партийе, 5-мĕш туртан урăх вăхăта кучарнăскерне, Флор выљаса илнĕ.

(ТАСС).

# Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕн 247 № приказĕ

30-XII—1937 ç.

**Уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх хуракан налог ĕçĕсене туса ирттерессипе тата çав налога 1938 çулта тӳлемели сруксем çинчен.**

ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 ç. майăн 17-мĕшĕнче уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх хунă налога пухасси çинчен çирĕплетнĕ положенин 27 тата 29-мĕш статйисем тăрăх тата ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комисариачĕн 1936 çулти мартăн 10-мĕшĕнче тупăш тăрăх хунă налог йĕркин 187 номĕрлĕ инструкцийĕн 49-мĕш параграфĕ тăрăх, Чăваш АССР-че 1938 çулта уйрăм çынсенчен тупăш тăрăх хунă налога пухас ĕçĕн тĕп ĕçĕсене туса ирттерме çак сруксене палăртас:

1. Ĕçукçин çирĕп нормисем тăрăх, налог хунисемсĕр пуçне, пĕтĕм тӳлекенсем, I, II тата III категорисене кĕртнисем, ку шута кустарсемпе ремеслинниксене кĕртмесĕр, 1938 çулти йанварĕн 20-мĕшĕччен хăйсем пурăннă çĕрти районри тата хулари финанс пайĕсене 1937 çулта илнĕ хăйсен тупăшĕсем çинчен деклараци памала.

2. Çак приказăн I пунктĕнче кăтартнă тӳлекенсене 1938 ç. йанварĕн 25-мĕшĕнчен районри тата хулари финанс пайĕсен иртнĕ çулта илнĕ тупăшсене пĕтĕмпе шута илсе тупăш налогне шутласа памала.

1937 çулти тупăштăрăх районри тата хулари финанс пайĕсем шутласа хунă подоходнăй налогпа 1937 çулти окладран тӳленĕ хисеп хушшинче уйрăмлăх пулсан, çав уйрăмлăха тӳлемели пĕлтерӳве илсен, 15 кун хушшинче тӳлесе татмала.

3. II категорине кĕртнĕ кустарсемпе ремесленниксем,—вĕсем çирĕп ĕçукçи норми тăрăх тӳлеççĕ,—(полож. 24 ст.) 1938 çулта подоходнăй налог окладне пĕртан хисеппе—мартăн I, майăн I, ийулĕн I тата 1938 ç. октаберĕн I-мĕшĕнче тӳлемеле.

4. Ытти тӳлекенсем, I, II тата III категорине кĕртнисем, иртнĕ çулшăн шутласа панă доходран 25-шер процент мартăн I-мĕшĕнче, майăн I-мĕшĕнче, ийулĕн I мĕшĕнче тата октаберĕн I-мĕшĕнче тӳлемеле.

Пирвайхи хут налог тӳлекенсем кăтартнă сруксенче районри тата хулари финанс пайĕсем 1938 çулта пулма пултаракан тупăшран шутласа хунă оклада 25-шер процент тӳлеççĕ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ—Срибный.

Ответлă редактор заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

**Академи театрĕнче**

**Йанварĕн 6-мĕшĕнче**

ШКУЛ АЧИСЕНЕ ВАЉЉИ

Кăнтăрлахи спектакљ

*А. Н. Островский*

**„На всякого мудреца довольно простоты"**

(3 пайлă комеди)

Кăнтăрла 12 сехетре пуçланать.

Билет хакĕсем 75 пусран 2 т. 50 пус таран.

**КАÇХИНЕ**

*„На всякого мудреца довольно простоты"*

Талон № 74. Абонемент № 9. Талон № 2

**Йанварĕн 7-мĕшĕнче**

**Филармонин симфонилĕ концерчĕ**

ПРОГРАММĂРА: ССР Сойузĕнчи халăхсен музыки.

Симфонилĕ оркестр— БЛАГОДАТОВ йертсе пырать.

Солистсем—КАЗАКОВА (сопрано) тата ШОНГУТСКИЙ (баритон)

**Пуçламăшĕ каçхине 8 сехетре**

Билетсене театр кассинче 3 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Абонементсене малтанах илме пулать (Герцен урамĕ 9-мĕш № сурт). ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти „Пекарь" ертелĕ ТĔРЛĔРЕН СУРТ

**сушкăсем, вĕтĕ сушкăсем, кренделсем**

**ПĔÇЕРСЕ КĂЛАРАТ**

Районсенчи суту илу организацийĕсене те зайавкăсем тăрăх пĕçерсе парать.

2—1 ПРАВЛЕНИ.

*Кассаил те усра!*

Партвĕренĕвĕн Центрти çурчĕпе парти хула комитечĕ. ПСК(б)П Истори тата Ленинисăм, ССР Сойузĕн истори, Çĕнĕ истори, кулленхи политикă тата парти строителстви кружокĕсенче вĕрентекенсемпе вĕренекенсем ваљљи партвĕренĕвĕн çуртĕнче преподавателсен консуљтацине организацилене.

**Консуљтацисем куллен 5 сехетрен пуçласа 8 сехет çитиччен пулаççĕ.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. ПСК(б)П историйĕпе Ленинисăм | 3, 5, 9, 11, 16, 19, 23, 27, 29 | Стољаров С. Ф. Сергейев И. Ахазов. |
| 2. ССР Сойузĕн историйĕ тата çĕнĕ истори | 4, 14, 25 | Варламов Григорйев. |
| 3. Кулленхи политикă тата политграмота | 1, 7, 17, 19, 25 | Судаков А. Ф. Назаров. |
| 4. Партстроителства | 2, 14, 26 | Смирнов Лапин. |
| 5. Партпропагандă методики | 7, 9, 19, 27 | Игнатйев Григорйев. |
| 6. Парти историне тата ленинисăма вĕрентекен пропагандиссен семинарĕ | 9, 19, 27 | Ахазов Смирнов. |
| 7. Политграмотапа кулленхи политикăна вĕрентекен пропагандиссен семинарĕ | 7, 17, 25 | Назаров. |

Пропагандиссен семинарĕ пропагандиссене производствăран уйăрса, ирхине 10 сехетрен пуçласа каçхине 8 сехетчен ирттереççĕ.

ПСК(б)П Хула комитечĕ. Партвĕренĕвĕн çурчĕ.

**Шупашкар хулинчи финанс пайĕ**

*Шупашкарти пур граждăнсене те*

***ПĔЛТЕРЕТ***

Тупăш тăрăх тӳлекен налук çинчен кăларнă положенин 49-мĕш §§ тăрăх 1937 çулта, ĕçукçипе пенçисĕр пуçне, çуртсене (хватерсене, пӳлĕмсене) тара парса, алăстапа ремесла ĕçĕпе тупăш илнĕ

**ПУР ГРАЖДĂНСЕМ ТЕ**

1938 çулхи йанварĕн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр 1937 çулта мĕн чухлĕ тупăш илни çинчен

**ДЕКЛАРАЦИ ПАМАЛА.**

Çулталăкра 700 тенкĕрен кайа тупăш илекенсене деклараци парассинчен хăтараççĕ.

Деклараци паманшăн, йе тата вăхăтра паманшăн та 200 тенке çити штраф хураççĕ, суйа панăшăн уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

Деклараци бланкисене хулари финанс пайĕнче илмеле (Промсойуз çурчĕ, айалти хут).

Хулари финанс пайĕ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРОДСКОЙ ТОРГ НКВТ ЧАССР

**ЧЕБТОРГ МАГАЗИНĔСЕНЧЕ ГРУЗИ ĔÇĔМСЫРЛИ ЕРЕХĔСЕНЕ ЫЙТĂР:**

Портвейн №№ 12, 35, 37; портвейн лайăхрахи №№ 13, 36, 18, шурри № 36.

Кахетинское № 2 тата 36, Карданахи № 37 тата 39, Саамо, Мускатељ, Коњйак 4,5 çăлтăрлисем.

Садвинтрестпа Пахчаçимĕç организацийĕсен Горькири тата Хусанти завочĕсенче тунă наливкăсемпе настойкăсем.

*Пирĕн магазинсенче çак ерехсене илме ан манăр.*

Английская горькая, Тминная, Пшеничная, Перцовка тата Нежинская рябинка.

*Дирекция.*

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 10. Гор. Чебоксары, Типография №1 Чувашполиграфтреста заказ № 2. Тираж 14500. 53—52 см. 1—1 п. л.